К 84.09(=[illegible])6
Т 88
Ч-41187

# В. Туркай



# Шурӑ фарфӑр чашӑк

Национальная библиотека ЧР
4-041187

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

## В. ТУРКАЙ В. ТУРКАЙ ПИРКИ — КĔСКЕН

ÇУРАЛНĂ ÇУЛ, УЙĂХ, КУН: 1961 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕ.

ÇУРАЛНĂ ВЫРĂН: Кĕтне тăрăхĕ — Чăваш республикинчи Каçал-Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнел ялĕ.

АННЕ: Çерçи Палюк Кантрачĕн Хветӳçĕ/Воробьева Феодосия Кондратьевна.

АТТЕ: Чудин Владимир Кузьмич.

АЧАЛĂХ: Кукаçие çĕнĕ самана хуçисем 1930 çулта кăкланине пула улăм витнĕ пӳртре çуралса, а т т е с ĕ р ӳсрĕм (ун у р ă х çемйеччĕ). Çапах та атте маншăн — ман пурнăçăмри чи çутă та чи хаклă Ар.

Тăваттăмĕш тата улттăмĕш классем хыççăн, каникулта, çăвĕпех ĕне кĕтĕвĕ кĕтрĕм.

Шкулта начар вĕренмен. Уйрăмах историпе литературăна юрататтăмччĕ. 1978 çулта, Хырай Ĕнелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕтĕм.

ÇЫРМА ПИКЕННИ: Пĕрремĕш сăввăм, 8-мĕш класра вĕреннĕ чух çырнăскер, «Пире вăрçă кирлĕ мар!» ятлă.

ВĔРЕНТЕКЕНĔМСЕМ: Анне. Атте. Хырай Ĕнел чăвашĕсем. Анна Осиповна Читнаева (пĕрремĕш вĕрентекенĕм). А. И. Ласточкина, Г. П. Алексеева (шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕскерĕмсем).

Арçук Тарасов. Виталий Станьял.

1981 çулта Иосиф Дмитриевпа паллашрăм. Иосиф ман ăс-тăнăмра, тĕнчекурăмра чăн-чăн революци турĕ. Драматурги анине сухаласа пăхма та вăлах хавхалантарчĕ мана. Драматург «пулса тăнăран» эп 1986—1987 çулсенче ГИТИС çумĕнчи Театрăн Аслă курсĕнче вĕренме тивĕçлĕ пулайрăм.

Тĕп Вĕрентекенĕм, паллах, — Пурнăç. П У Р Н Ă Ç.

КУ ТАРАНА ÇИТИЧЧЕН КУРМА ТИВНĔ ЧЫС-ХИСЕПĔМ: Чăваш çамрăкĕсен Пĕрлĕхĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕ (1991), Чĕмпĕр чăвашĕсен «Еткер» фончĕн И. Я. Яковлев ячĕллĕ премийĕ (1993).

КИЛЙЫШĂМ: Мăшăрăм — Ольга Николаевна Воробьева (Егорова). Илемпипе Силпи — хĕрĕмсем. Çак виçĕ Пирĕштисĕр эп п у р ă н а й м а с т ă п.

КĂМĂЛĂМ-ТĔЛЛЕВĔМ: УТĂМ ХЫÇÇĂН УТĂМ — ИРĔКЛĔХ ЕННЕ!

*Шупашкар.*
*1994 çулхи январĕн 17-мĕшĕ.*



К84.09(=Чув)6
Т88

# В. Туркай

# Шурă фарфăр чашăк

Сăвăсем. Поэма

*Аннене, Феодосия Кондратьевна*
*Воробьевана халаллатăп*

Шупашкар — 1994

В. Туркай 15.02.95
Шупашкар.

## ÇАК КĔНЕКЕ АЯЛАРАХ АСĂННĂ ОРГАНИЗАЦИСЕМПЕ ПРЕДПРИЯТИСЕМ, УЙРĂМ ÇЫНСЕМ ПУЛĂШМАН ПУЛСАН, КУН ÇУТИ КУРАС ÇУКЧЧĔ:

— Чăваш Республикин патшалăх пурлăхне тытса пыракан Патшалăх Комитечĕ (Председателĕ-Министрĕ — АНДРОНОВ М. Г.);
— Чăваш Республикин халăха вĕрентес ĕç, наука тата аслă шкулсен Министерстви (Министрĕ — ДАНИЛОВ В. Д.);
— «Чувашкредитпромбанк» коммерци банкĕ (Президенчĕ — ГУРЬЕВ В. В.);
— «Шупашкарти машинăсем тăвакан завод» акционерсен Обществи (Генеральнăй директорĕ — ГРИГОРЬЕВ Н. Н.);
— «Инвест-ЛАД» строительство фирми (Генеральнăй директорĕ — ГОРДЕЕВ В. Н.);
— Российăри «РОСИКА» информаци Агенстви (Генеральнăй директорĕ — РУБАН Г. А.);
— «АККОНД» акционерсен Обществи (Генеральнăй директорĕ — ИВАНОВ В. Н.);
— Чĕмпĕр чăвашĕсен «ЕТКЕР» ыркăмăллăх фончĕ (Президенчĕ — МУСТАЕВ О. Н.);
— «Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ» акционерсен Обществи (Генеральнăй директорĕ — МАЛОВ В. А.);
— «Чебоксарская керамика» акционерсен Обществи (Генеральнăй директорĕ — ЯКУШКИН Б. Н.);
— «Хавхалану» юлташлăх (Ĕç тăвакан директорĕ — ТАРАСОВ Ю. А.);
— ЕРМАКОВ Валерий Иванович.

*ПУРСĂРА ТА ÇĔРЕ ÇИТИ ПУÇ ТАЙСА ЧĔРЕРЕН ТАВ ТĂВАТĂП!*

*Валери ТУРКАЙ*

ПРОВЕРЕНО 2016 14 СЕН 2017
Ч-41187
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ББК 84 Чув 7-5

Т 88

Т $\frac{4702710202—004}{6Ш\ 9(03)—1994}$ без объявл.

ISBN 5-86 765-004-9

© Издательство «Чувашия», 1994 г.
© Художник-оформитель С. Михайлов.
© Тургай В.

# УТĂМ ХЫÇÇĂН УТĂМ — ИРĚКЛĚХ ЕННЕ



# ЧĂВАШ ТУПИ

*В. Ермакова*

...Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ.
Юлташ кăна мар — тăван-хурăнташ.

Эс пул академик,
Эс пул генерал,
Эс пул çĕр ĕçченĕ —
Тăван çĕр хуçи...
Çакна çеç ан ман эс,
Ан ман эс, чăваш:

Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!

Эс пул пысăк пуçлăх,
Пулсам эс кĕтӳç,
Эс пул çамрăк йĕкĕт,
Пулсам ватă çын...
Çакна çеç, çакна çеç
Ан ман эс, чăваш:

Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!
Чăвашшăн чăваш — чи çывăх юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!

Çакна ăнлансассăн,
Çакна ĕненсен,
Кашни ыр чăваш
Çакăнпа килĕшсен,
Пиртен чĕрĕ халăх,
Пиртен вăйлă халăх,
Пиртен аслă халăх
Пулмасть Çĕр çинче!

Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!

Чăваш!
Çӳлти Турă упратăр сана!
Нихçан Сӳнми Çутă
Çутаттăр Çулна!

*(1991 ç., çу уйăхĕ)*

## ЧĂВАШСЕМ:
## КОММУНИЗМ ХЫÇÇĂН: ЕРТӲÇĔСĔР

Ертӳçĕ çук.
Ç у л н е  пĕлмесĕр.
К у н т а  юлма та юрамасть.
К у н т а х юлсан, эпир
пĕтетпĕр.
Пĕтмешкĕн темшĕн Чун хушмасть.

Ертӳçĕ çук...
Ертӳçĕ пулнă!
Ун Сассине  и л т е с  т е м е н.
Ăна Хăямата ăсатнă.
Ăна никам та шеллемен.

Ертӳçĕ пур.
Пурах Ертӳçĕ!
Çӳрет вăл хамăр хушăрах.
...Часах ÇУЛА тухмашкăн тивĕ,
Тăванăмсем, часах. Часах!

*27.12.93*

## ÇИРĔММĔШ ĔМĔР ВĔÇĔНЧИ ХӲРЛĂХЛĂ ЧĂВАШĂН ХӲХЛЕВĔ

*Вĕрентекенĕме Иосиф Дмитриева.*

*Атăл урлă каçмасан, чăваша ăс кĕмест.*

Ваттисем ăнланса илнинчен.

Атăл урлă каçрăмăр.
Ăсланмарăмăр.
Çичĕ ют кулли пулма пăрахмарăмăр.
Атте-анне псхилне асран ямарăмăр.
Пĕрне-пĕри савма, пулăшма манмарăмăр.
Анчах
Пĕр хăват, пĕр йыш пулма хăнăхмарăмăр.
«Çыхман çапă — шăпăр мар» текелерĕмĕр.
Хамăр
«Çыхман çапă» пулнипех
Ĕмĕрсем ĕмĕрлерĕмĕр.

Ĕнтĕ тӳсрĕмĕр, ĕнтĕ чăтрăмăр.
Усалпа усал пулас темерĕмĕр.
Ухмахпа ухмах пулас темерĕмĕр.
Ыррине пула йăваш пултăмăр.

Вăхăтне кура «йăваш» ятăмăр
Тӳрре тухрĕ-тĕр, тĕрĕс пулчĕ-тĕр.
Урăхла пулсан, çичĕ ют пире
Пĕр чăваш юлми пĕтеретчĕ-тĕр.

Шăпине кура ухмаха пени
Тĕрĕс пулчĕ-тĕр, тӳрре тухрĕ-тĕр.
Урăхла пулсан, çичĕ ют пиртен
Сивĕ кĕл кăна хăваратчĕ-тĕр.

Самани паян самай улшăнчĕ.
Урăхла çилсем вĕрме тытăнчĕç.
Халăхсен Тĕрми пушанать мар-и?
Халăхсен Тĕрми ишĕлет мар-и?

Анчах эпĕр çеç тĕлĕретпĕр-ха!
Анчах эпĕр çеç вăранмастпăр-ха!
Халь «йăваш» тени «мĕскĕн» тениех.
Халь «йăваш» тени «катăк» тениех.

Çук, усал пулма йыхăрмастăп эп.
Çук, тискер пулма йыхăрмастăп эп.
Вут чĕртекенсем вутра çуннă, тет.
Пуç касакансем пуççăр юлнă, тет.

Анчах мĕскĕн те пулас марччĕ тек!
Çичĕ ют кулли пулас марччĕ тек!
Тыткăнран йўççи тата мĕн пур-ши?
Ирĕкрен тутли тата мĕн пур-ши?

Никамран нимпе катăк мар эпир.
Никамран нимпе чухăн мар эпир.
Пур Сăмахăмăр. Пур Эрешĕмĕр.
Улăпсем те пур. Кăйкăрсем те пур.

Пур Кунçулăмăр, авалхи Кунçул.
Пур ыр ятăмăр, таса чунăмăр.
Пĕрлĕх çеç сахал! Ирĕк çеç сахал!
Тĕп хуламăр пур... Çук Çĕршывăмăр.

Усси пулĕ-и, усси пулмĕ-и
Сăмаха калам, юррăма юрлам.
Яшсемпе хĕрсем илтĕç, тен, мана,
Чун ыратнине илĕç, тен, туйса.

Мĕнпур шанчăкăм, шăллăмсем, сирте!
Пур йăпанчăкăм, йăмăксем, сирте!
Ухмаха персе йăлăхмарăр-и?
Чурасем пулса тăранмарăр-и?

Е Атиллăна астумастăр-и?
Е хунсен халне тек туймастăр-и?
Е çич ют йышне тарас тетĕр-и?!
Аттесен çĕрне сутас тетĕр-и?!

...Ах, апла пулсан, пурăнам та мар.
Чун ыратнине тек туям та мар.
Хăрнă хурама пулайса тăрам,
Тăлăх Çĕрĕмпе хурланса юрлам:

Атăл урлă каçрăмăр.
Ăсланмарăмăр.
Çичĕ ют кулли пулма пăрахмарăмăр.
Атте-анне пехилне асран ямарăмăр.

Пĕрне-пĕри пулăшма, савма манмарăмăр.
Анчах
Пĕр хăват, пĕр йыш пулма хăнăхмарăмăр.
«Çыхман çапă — шăпăр мар» текелерĕмĕр.
Хамăр
«Çыхман çапă» пулнипех
Ĕмĕрсем ĕмĕрлерĕмĕр.

*1990*

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

Поэт ахаль çын мар.
Ахаль çын мар поэт.
Ун хăйĕншĕн çеç мар,
Ун ыттисемшĕн те
вутра çунса, шывра путса,
çӳлтен-çӳле вĕçсе,
ӳксе, чăл-пар ванса,
кĕтмен çĕртен сӳнсе,
сасартăк тепĕр хут тивсе,
я в а п тытма тивет.

Поэт ахаль çын мар.
Ахаль çын мар поэт.
Çук, çук, вăл Турă мар!
Анчах... Анчах у н куçĕпе
Турă сăнать пире.
У н ă н йыхравлă сассипе
Турă чĕнет пире
хăй ытамне.

Поэт ахаль çын мар.
Ахаль çын мар поэт.
Шеллемелле-и поэта?
Çук!
Упрамалла-и поэта?
Çук!
(Ăçтан упрайăн-ха ăна
вăл хăйне хăй тата пире
упранинчен ытла?)
Поэта ĕ н е н м е л л е.
Ĕ н е н м е л л е кăна.

Ахаль çын мар поэт.

*31.01.93.*

## ВАСИЛИЙ ДВОРНИКОВА

*1990 çулхи октябрĕн 23-25-мĕш кунĕсенче пĕрле выçă ларса политика акцине ирттернине аса илмелĕх*

Эс астăватни, Ваçили-Ваçлейĕм:
Епле кăраччĕ ç а в кĕрхи кунсем...
(Мĕскер вăл — çут çанталăкри çил-тăвăл —
Ч У Н Р И çил-тăвăлпа танлаштарсан?)

Чунăмăрсем...
Чунăмăрсем çеç пурччĕ.
Ытти... патшалăханччĕ.
Империн.
Çичĕ ютăн.
Чунăмăрсем
сурансем пек
суратчĕç,
Тăллана халăхăмăрăн
хĕн-асапне
туйса.

Эс астăватни, Ваçили-Ваçлейĕм,
Çав х ĕ м л е н м е п у ç л а н ă
куççене?
Иккен, çын куçĕ
у ç ă л т ă р тесессĕн,
Çын куçĕнчен
у ç ă к у ç п а
тинкермелле.

Эс астăватни, Ваçили-Ваçлей:
Епле тапатчĕç пирĕн чĕресем...

*1. 09. 93.*

## УЙ ВАРРИНЧЕ

Юрлаççĕ ӳсĕр чăвашсем.
Эп балконра пирус туртса тăратăп.

Юрлаççĕ ӳсĕр чăвашсем:
«Уй варринче — лаштра юман...
Уй варринче — лаштра çăка...»

Юрлаççĕ ӳсĕр чăвашсем...
Эп балконра пирус туртса тăратăп...
Уй варринче хăрать лаштра Юман.
Уй варринче хăрать лаштра Çăка.

*19. 09. 92.*

* * *

*Пирĕн урам анаталла*
*шуса анать пĕр çуна...*
Юрăран.

Пирĕн урам анаталла
Çаплах шуса анать çуна.
Çаплах шуса анать çуна.
Кам тытса чарĕ-ши ăна?..

Эп урампа иртнĕ чухне
Çаплах йĕрет пĕр хĕрача.
Çаплах йĕрет пĕр хĕрача.
Кам лăплантарĕ-ши ăна?..

Пирĕн урам анаталла
Çук утакан,
Çук чупакан,
Çук çунапа ярăнакан,
Çук хĕрачан çут куççульне
Шур тутăрпа типĕтекен.

Пирĕн урам анаталла
Шуса анать
пушă çуна.
Пирĕн урам анаталла
Вĕçет шап-шурă юр кăна.

*1991*

## ÇУЛ ВĔÇĔ

*Анатолий Миттова асăнса*

такамсем пире таçта ертсе каяççĕ

çулĕсем тумхахлă
кукăр-макăр

тутă çăхансем лÿпперрĕн явăнаççĕ
хĕрлĕ пĕлĕтре

эпир утатпăр

ак каллех кĕпер патне çитетпĕр
хĕрлĕ юханшыв юхать умра

шурă шăмăсем çине пусса утатпăр
такăнмасăр
нимĕн те туймасăр

такамсем пире таçта ертсе каяççĕ

тĕттĕмленнĕçем тĕттĕмленет

*1990*

## КУНҪУЛ: КУКАҪИ ТАТА ЭПĔ

Ман кукаҫи —
ВКП(б) кăклан̆ ват юман.

Вăл айăплă пулман.
Вăл айăплă пулма пултарайман!
Пуҫ ҫĕклеми ĕҫленĕ вăл, айван.
Ача-пăчам (мĕнпурĕ сакăр чун)
выҫă ан лартăр, тенĕ.
Пултарайман вăл
ĕҫлемесĕр
ик аллине усса ларма!

Йăваш чăваш.
Айван чăваш...

Ман кукаҫи ăҫта, КПСС?
Ăҫта ун вилтăпри?
Ăҫта ун ҫутă куҫĕсем?
Йăваш кулли ăҫта?
Ăҫта ун кĕреҫе сухалĕ?
Ылтăн алли ăҫта?

Хăҫан
кам
ыйтĕ каҫару
ман аннерен,
ман куккаран?
Хăҫан
кам
ыйтĕ каҫару
манран?..

КПСС,
сана эп каҫаратăп.
Пĕлетĕп:
эс урăхла тума пултарайман.
Эс урăхла пулма пултараймастăн!
Эп каҫаратăп, КПСС, сана.

Тен... эс мана та кӑклӑн
ыран е виҫмине...
Тур пулӑштӑр сана, КПСС,
мана кӑкланӑ чух!

*1989*

## ЯЛАН ВӖСЕМПЕ ПӖР ҪУЛПА УТМАНШӐН ӲПКЕЛЕКЕН ХӐШПӖР ВӖРИ ЮЛТАШӐМСЕНЕ

*Я вам не кенар!..*
*С. Есенин.*

Эп сирӗншӗн... турчӑка мар —
Манпа вӗри кӑвар туртмашкӑн!
Эсир — маттур. Эсир — хастар.
Эп... т и в ӗ ҫ  м а р  хастар пулмашкӑн.

Эп тивӗҫ мар  т а р а н  пулма —
Стенасене кисрентермешкӗн.
Ҫын хыҫҫӑн эп утасшӑн мар.
Эп... пӗчӗк хӗвел пек ҫиҫесшӗн.

Эп, пӗчӗк хӗвел пек ҫиҫсе,
Тӗнчемӗре кӑшт ҫутатасшӑн.
Ытла та тӗттӗм-ҫке, туссем!..
...Эсир манран  с а л т а к  тӑвасшӑн.

*29.12.93*

ч-41187
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# ТĂВАН ЯЛĂМА

*Колхоз тунă чух вăхăп ре кĕнĕ*
*Хырай Ĕнел хресченĕсене, çав шу аçие,*
*Çерçи Палюк Кантратне (Кондрат вич*
*Воробьева) аса ă.*

Илсе тухрĕç сана
хире
шуçăмпа.
Куçна çыхрĕç
кĕрен
тутăрпа.
Тимĕр сасă кĕрлерĕ:
«Тĕлле!»
...Пуля вĕçрĕ
тĕлленĕ тĕле.

Çăхансем явăнаççĕ.
Тӳпе
Тулнă чĕрĕ юнпа —
кĕрен.
Урнă çил
урлă-пирлĕ
вĕрет.
Хĕрессем
персе анчĕç
çĕре.

Эс вилмерĕн тӳрех.
Чĕрӳ
Пулнă санăн ытла та
хĕрӳ.
Анчах тек хĕм сапмасть
сан куçу.
Кăлкан пек
кăвакарнă
пуçу.

...Эс тухатăн
хире
шуçăмпа.
Шухă çил
лăскакан
шур тумпа.

Эс каллех пикенетĕн
акма.
Ик енче —
ик хура Хурама.

*1988*

## ВИТАЛИЙ АДЮКОВА (ЭТЮК ВИТТИНЕ)

Юрла, Витя! Этюк Витти, юрла!
Сана кăна итлесшĕн ман чĕре.
Сана кăна шанатăп эп паян
Çак вĕççĕр-хĕрсĕр çутă Тĕнчере.

Юрла, Витя — çак аслă Çĕр çинче
Этем валли телей çукки çинчен.
Юрла, Витя — хăш чух çу кунĕнчех
Этем чĕри шăнса кӳтни çинчен.

Юрла, Витя! Юрла! Сан Юррупа
Чунĕсене йăпатчăр ч у н л и с е м,
Чĕрисене сиплеччĕр ч у н л и с е м...
Чунсăррисен — хăйсен юрăçисем.

Юрла, Витя! Этюк Витти, юрла!
Сана кăна итлесшĕн ман чĕре.
Сана кăна шанатăп эп паян
Çак вĕççĕр-хĕрсĕр т ă в ă р Тĕнчере.

*07.03.94*

## ШУПАШКАР: НЕОН ÇУТИСЕМ

«Гостиница «ЧУВАШИЯ»
«Ресторан «ЧУВАШИЯ»
«ЛЕТАЙТЕ САМОЛЕТАМИ АЭРОФЛОТА!»

«ДОМ ТОРГОВЛИ»
«ВАРЬЕТЕ»
«СЛАВА КПСС!»

...Славине слава та-ха,
анчах ăçта кунта, ачам,
чăваш сăмахĕ?

Чăваш сăмахĕ-и, мучи?
Ав çиçет малта:
«ЛЕНИН ПАРТИНЕ МУХТАВ!»

*1988*

* * *

*Акă куçăм умĕнче — Чăваш çĕрĕ.*
Çеçпĕл.

Аçтăрхана çитрĕм. Чунăм лăпланмарĕ.
Пуçăмран каймарĕç йывăр шухăшсем.
Ман Тăван Çĕршывăн хурлăхлă Сăнарĕ
Куç умне тухсассăн, илтĕм çӳçенсе.

Ман Тăван Çĕршывăм — халран кайнă кĕлмĕç...
Ак каллех утать вăл Хурăнлă Çулпа.
«Мускава çитсессĕн, тен, пĕр татăк парĕç...» —
Йăпатать чунне вăл çутă шанчăкпа.

Мускава çитсессĕн, ман Тăван Çĕршывăм
Килсĕр анчăк евĕр тыткалать хăйне.
Аллине тăсать вăл именсе, йăвашшăн:
«Паян пурăнмалăх... Манмăп ĕмĕрне...»

Аçтăрхана çитрĕм. Чунăм лăпланмарĕ.
Атăлăм, мăн Атăл, каласам мана:
Нумайччен-и манăн чĕрене çунтарĕ
Ман Тăван Çĕршывăн хурлăхлă Сăнарĕ?

*август, 1989*

# САНА, ВЫРĂС ХАЛĂХĔ!

*О. Мустаева*

Эпир
хамăра хамăр
юратмастпăр.
Сана
юрататпăр,
Вырăс Халăхĕ!
Эпир
хамăршăн пăшăрханмастпăр.
Саншăн
пăшăрханатпăр,
Вырăс Халăхĕ!
Эпир
хамăршăн тăрăшмастпăр.
Саншăн
тăрăшатпăр,
Вырăс Халăхĕ!
Эпир
хамăра хамăр
ырă сунмастпăр.
Сана
ырă сунатпăр,
Вырăс Халăхĕ!
Эпир
хамăршăн асапланмастпăр.
Саншăн
асапланатпăр,
Вырăс Халăхĕ!
Эпир
хамăршăн пурăнмастпăр.
Саншăн
пурăнатпăр,
Вырăс Халăхĕ!

..................

Аслă, мухтавлă, мăнаçлă,
ăслă, хăватлă, сăпайлă,
сывă, кĕрнеклĕ, илемлĕ,

сар хӗвелрен те çутă,
çӳл тусенчен те çӳллӗ,
аслатирен те вăйлă
Ырă Хуçамăр, Вырăс пиччемӗр,
эс пулмасан-и,
эс пулмасан-и,
эс пулмасассăн,
хӗвел те сӳнет,
эс пулмасассăн,
тӗнче те пӗтет!

..................

Эпир
малашне те,
хамăра юратмасăр,
сана
юратăпăр,
Вырăс Халăхӗ!
Эпир
малашне те,
хамăршăн пăшăрханмасăр,
саншăн
пăшăрханăпăр,
Вырăс Халăхӗ!
Эпир
малашне те,
хамăршăн тăрăшмасăр,
саншăн
тăрăшăпăр,
Вырăс Халăхӗ!
Эпир
малашне те,
хамăра ырă сунмасăр,
сана
ырă сунăпăр,
Вырăс Халăхӗ!
Эпир
малашне те,
хамăршăн асапланмасăр,
саншăн
асапланăпăр,
Вырăс Халăхӗ!
Эпир малашне те,

хамăршăн пурăнмасăр,
саншăн,
саншăн çеç
пурăнăпăр,
Вырăс Халăхĕ!

*31.05.93*

# ТĂВАН ÇĔРШЫВ

*Поэма*

...мăнтарăн çĕршывăм...

# РАÇÇЕЙ

Раççей,
эс айăпна туятăн-и —
вышкайсăр пысăк çылăхна?..

Кам хĕтĕртрĕ сана, Раççей,
ешерекен улăхсене,
сĕм-сĕм хура вăрмансене,
пăр-çĕлĕклĕ сăрт-тусене
хуçа пек таптаса утма
тĕнчен тăват енне?

Раççей, эс ăнланатăн-и
çав улăхсем, çав çарансем,
çав сăрт-тусем çине
хуçа пек таптаса утма
сан ирĕкӳ пулманнине?

Кирек ăçта та эс —
чĕнмен хăна, Раççей.

Раççей,
эс тинĕссем патне васканă чух
таканлă аттупа
ют çĕрсене çеç мар,
х а л ă х с е н е
таптанă.
Эс халь те  х а л ă х с е м  çинче
тăратăн —
капашсăр пысăкскер,
каварлăскер,
Çут тĕнчене сăлтавсăрах
икĕ пая пайлăнăскер,
хисепсĕрскер,
выçса хăврăлнăскер.

Мĕнех, Раççей,
эпир сана
каçарăпăр.

Анчах каçарĕ-ши сана,
пуласлăх парĕ-ши сана
Тĕнче Хуçи?
Пĕлместĕп.

*1989*

## ШУПАШКАР

Ку вăл — манăн Шупашкарăм:
Чăваш мăшкăлĕ, мухтавĕ,
Чăваш çавăнăçĕ, терчĕ,
Чăваш ĕмĕчĕ, инкекĕ,
Чăваш чăнлăхĕ, ултавĕ,
Чăваш тамăкĕ, çăтмахĕ...
Ку вăл — манăн Шупашкар.

Хăш чухне чи çывăх тус пек,
Хăш чухне усал тăшман пек
Туйăнатăн эс мана,
Шупашкарăм, Шупашкар.

Эсĕ ырă та, хаяр та,
Эсĕ çепĕç те, кăнттам та,
Эсĕ ăслă та, айван та,
Эсĕ чухăн та, пуян та,
Эсĕ — Турă та, Шуйттан та,
Шупашкарăм, Шупашкар!

...Чăваш тамăкĕ, çăтмахĕ,
Чăваш чăнлăхĕ, ултавĕ,
Чăваш мăшкăлĕ, мухтавĕ,
Чăваш каçĕ, Чăваш Ирĕ...
Ку вăл — манăн Шупашкар.

*16.03.92*

* * *

вырăсланнă чăвашсем
ĕмĕлкесем пек
хĕвĕшеççĕ ман тавра
ăшçунтармăшсем

вырăсланнă чăвашсем
пĕрре
иккĕ
виççĕ...
сивĕ тĕксĕм çăлтăрсем
хăрнă хунавсем

вырăсланнă чăвашсем
чĕрĕ сурансем
тӳрленейĕр-ши эсир?
ӳт илейĕр-ши?

вырăсланнă чăвашсем
хурăнташăмсем
çухатас килмест сире
çухатас килмест

*24.03.92.*

# ЧУЛХУЛАПА ХУСАНӐН ХУШШИСЕМ

Чулхулапа Хусанӑн хушшисем —
çичĕ ют çарĕ таптанӑ Уйсем,
вут пиçĕхтернĕ Лаштра Юмансем,
чул шӑтарса тапакан Çӑлкуçсем.

Чулхулапа Хусанӑн хушшисем —
чун суранне сиплекен Кĕвĕсем,
Çут Тĕнчене сӑнлакан Тĕрĕсем,
Мал еннелле пӑхакан шух куçсем —
Чулхулапа Хусанӑн хушшисем.

*1989*

# 1236: ПĂЛХАР

1236. —
Пăлхарта инкек.
Пăлхара çич ют çаратрĕ
Тĕпĕ-йĕрĕпе.

1236 —
Ешĕл Пахчана
Çавраçил килсе тустарчĕ,
Витрĕ тусанпа.

1236 —
Пур çĕрте те юн.
Паянган
    Чăваш —
Кил-çуртсăр
    тăлăх-турат пек.

1236 —
Ешĕл Хунавсем
Тин çеç сивĕннĕ кĕл витĕр
Килчĕç тĕнчене.

1236.
Çул йӳппи — малта.
Чăваш Учĕ
    çумăр витĕр
Малаллах юртать.

*1990*

# АТӐЛҪИ ПӐЛХАР ИШӖЛЧӖКӖСЕМ КУҪ УМНЕ ТУХСА ЧУНА ҪӲҪЕНТЕРСЕН ҪЫРНӐ САВӐ

*Б. Чиндыкова*

*...мӑнаҫлӑхӑмӑрӑн ишӗлчӗкӗсем...*
Б. Чиндыков

мӑнаҫлӑхӑмӑрӑн ишӗлчӗкӗсем

ишӗлчӗксечӗн айӗнче — чӗремӗрсем
ишӗлчӗксенӗн айӗнче — шӑпамӑрсем

хуҫсассӑн
хуҫӑлаҫҫӗ
ҫунатсем

ишӗлчӗксенӗн айӗнче —
вӗҫевӗмӗр

вӗҫес тӗллевӗмӗр

*07.09.92—09.04.93*

* * *

Ĕнтĕ вăран, хăта, вăран, хăта.
Ĕнтĕ уçсам куçна, уçсам куçна.
Ĕнтĕ кӳлсем, хăта, кӳлсем, хăта,
Тапăртатса тăран чăпар утна.

Ĕнтĕ çитер, хăта, çитер, хăта,
Çитер, хăта, Никам Çитмен Çĕре.
Никам Çитмен Çĕре çитсен, хăта,
Кĕтсе илер Никам Курман Ире.

Ĕнтĕ çитет пире, çитет пире
Хĕвел Çути курмасăр пурăнса.
Ĕнтĕ çитет пире, çитет пире
Çич ют хурри пулса, çич ют
хурри пулса.

Ĕнтĕ вăран, хăта, вăран, хăта,
Ĕнтĕ тухар Çула, тухар Çула.

*сентябрь, 1991*

## Н. НИКИФОРОВ ЖУРНАЛИСТА АСӐНСА

Эп — читлӗхре ҫуралнӑ тигр.
Куҫа уҫичченех эп — тыткӑнра.
Эп ӑнтӑлман-и Ирӗке?
Эп талпӑнман-и
пур чӗрӗ чун хӑй пӗлнӗ пек
пурӑнакан ҫӗре?
Ҫу-ук, эп яланах паянхи пек йӑваш пулман!
Эп тимӗре шӑлпа кӑшланӑ!..
Анчах...
шӑлпа ҫыртса татаймӑн тимӗре.

Эп — тигр!
Читлӗхре ҫуралнӑскер.
Эсир мана курма ҫӳретӗр.
Эп тыткӑнришӗн савӑнма.
Эп сас парсан, сехӗрленсе ӳкетӗр,
кӑвакарса каятӑр самантрах.
Ан йӑпӑлтатӑр. Пурпӗрех
манран кушак ҫури тӑваймӑр,
«епле ачаш та ырӑ вӑл!» — тесе,
ман куҫӑмран пӑхса кулаймӑр.

Эп — тигр!!!
Манӑн асӑмра — пӗртен-пӗр ӗмӗт
(кӑра, мӑнаҫлӑ кӑмӑлпа пӗрле
мана ӑна ман несӗлӗм пилленӗ):
Ирӗке!
Самантлӑха ҫеҫ Ирӗке тухасчӗ!
Ирӗк чӗрҫи ҫине ват пуҫӑма хурасчӗ!..
Вара шел мар
ӗмӗрлӗхе
куҫа хупсан та.

*1989*

* * *

гипноз сеансĕ вĕçленет
куç уçăлать
(уçăлмасан тен лайăххрахчĕ?)
куç уçăлать
гипноз сеансĕ вĕçленет

ку таранччен куçа курăнманни
сасартăк курăнма пуçларĕ:

эп шурлăх варринче çапкаланатăп

вăрăмтуна-шăна-ўпре сĕрлет
  ман юнăма ĕме-ĕме киленнĕскер
  ман юнăма ним хăварми ĕмес ĕмĕтлĕскер

çĕлен-калта
  ман куçăм уçăлма пикеннине сиссе
  чăл-пар саланнăскер
кирек хăш самантра та
  ман çине сиксе ўкме хатĕрленсе
мана сăнать-сăнать-сăнать

таçтан хăяматран
  çăхансем пек
вĕççе килеççĕ сивĕ куçлă çăткăн сăмахсем:
КПСС БЫЛА И БУДЕТ АВАНГАРДОМ!
ВПЕРЕД, К ПОБЕДЕ КОММУНИЗМА!

эп шурлăх варринче çапкаланатăп
гипноз сеансĕ вĕçленет
куç уçăлать
  хăй курнинчен хăй шикленсе

*1990*

## ЧӐВАШРА АРСЕМ ПӖТМЕН-ХА!

*В. Анишина*

Чӑвашра Арсем пӗтмен-ха!
Ан кулянӑр, тӑвансем.
Пулӗ ӗҫ те, кӗрешӳ те.
Килӗҫ ирӗклӗ кунсем.

Чӑвашра Арсем пӗтмен-ха!
Пурӑнатпӑр-ха апла.
Тӑвӑлра та, уярта та
Утӑпӑр малтан-мала.

Вӑл, чӑваш, пӗрре пӑхма ҫеҫ
Халран кайнӑн курӑнать.
Чӗринче ун Турӑ Пилӗ —
Шанчӑк Ҫулӑмӗ — ҫунать.

Пулӗ ӗҫ те, кӗрешӳ те.
Усса лармӑпӑр алла.
Чӑвашра Арсем пӗтмен-ха.
Пурӑнатпӑр-ха апла!

*24.03.92*

* * *

Чăваш килне иртен-çӳрен кĕрсессĕн —
Тутар-и, вырăс-и, е хамăр чăвашах —
Ăна тулли кĕрекене лартмасăр,
Ку таранчен пĕрре те кăларман.

Сĕм авалтан эпир, асран ямасăр,
Упратпăр аслă несĕл халалне:
Хăна валли ЮЛАШКИНЕ ПУЛСАН ТА
Чăн-чăн чăваш лартать сĕтел çине.

Ан тив, чăвашăн çук тем тĕрлĕ çимĕç:
Банан та персик, иçĕм, ананас...
Ун вырăнне эпир ТАСА ЧУНПА сăйлатпăр,
«Тавси!» тесе çĕклетпĕр алтăра.

Эпир ĕçне кура çынна хаклатпăр.
Ăсне кура саватпăр ват çынна.
Чун-чĕрине кура тăватпăр хапăл
Килен-каян хăна-вĕрлемĕре.

Чăваш килне иртен-çӳрен кĕрсессĕн —
Тутар-и, вырăс-и, е хамăр чăвашах...
Эпир пурне те ыр сунса чĕнетпĕр
ЧУН ТĔПЕЛНЕ иртмешкĕн маларах.

*1981*

* * *

*Ю. Тарасова*

Тусăмсем, эп сире юрататăп!
Пурсăра та тулли кăмăлпа
Телейпе ăнăçу эп сунатăп.
Малашне те утар пĕр çулпа.

Малашне те çут çăлтăр пек туслăх
Çунтăр пирĕн чунра, хĕмленсе.
Кĕрекемĕр ялан пултăр тулăх,
Ватăлмашкăн ан хăйччăр чунсем!

Малашне те пире аслă Пӳлĕх
Патăр тӳсĕм хастарлă пулма.
Хăват çиттĕр ырми ĕçлемелĕх,
Амансан, куççуль витĕр кулма.

Тусăмсем, эп пĕлеп: маххă памăр
Нихăçан та, ниçта та эсир.
Тăван халăх пирки çеç ан манăр.
Чи малтан ч ă в а ш с е м -çке эпир!

Чăвашсем, чăмăртанăр, пĕрлешĕр! —
Йыхăрать, тархаслать Самана, —
Ирĕке тухассишĕн кĕрешĕр!..
Шел, сахал çын илтет-ха çакна.

Шел, каллех тем кĕтсе пурăнаççĕ
Ыйхă пуснă «йăваш» чăвашсем.
Тăрăнса аниччен тăрмашаççĕ —
Ыр кураççĕ чее хуçисем.

Тăвансем, култарса çитет мар-и
Çич юта аттесен çĕрĕнчен?
Кĕлмĕç пек тинкерсе çитет мар-и
Выçă куçлă йăх-ях куçĕнчен?

Тусăмсем, эп сире юрататăп!
Пурсăра та тулли кăмăлпа

Тӳсӗмпе вӑй-хӑват эп сунатӑп,
Мал енне тинкерсе шанчӑкпа.

*1991*

## ЭТЮД

Художник Мастерскойӗ.
Художник Кӗреки.
Ҫурта.
Туркай (вӑл — эпӗ).
Тата Праски Витти.

«...Поэзи хӑй вӑл — Турӑ.
Поэзирен ҫӳллли
Ҫак ҫӗр ҫинче пулман-ха.
Пулман. Пулас та ҫук.

П о э т с е н е шанатӑп.
Поэтсене кӑна.
Сана илес пулсассӑн,
Валера, эс — Поэт.

Ӑнланӗҫ е ӑнланмӗҫ
Сана — эс, сӑвӑҫ, пӗл:
Поэзи пулмасассӑн,
Не стоит пурӑнма...»

Художник Мастерскойӗ.
Художник Кӗреки.
Ҫурта.
Туркай (вӑл — эпӗ).
Тата Праски Витти.

*05.03.94*

* * *

Никам та çӳремен кичем чиркӳ.
Тахçан п у л с а,
    халь п у р п у л м а пăрахнă
кив хула.
Кунта — чиркӳ тавра —
хурт-хăмăр вĕлли пек сĕрленĕ Пурнăçа
н и м х ă в а р м и
бульдозер
хырса кайнă.

Пĕлместĕп, ыттисем — епле,
    анчах та эпĕ
ват Шупашкарăн çак кĕтесĕнче
хама т а к а м сăнанине туятăп,
куратăп
ыттисем
курманнине.

Чиркӳ. Пасар. Шăв-шав та хĕвĕшӳ.
Хĕвел. Лавсем. Ватти-вĕтти. Яш-кĕрĕм...
КУÇСЕМ...—
хаваслă, хурлăхлă, кăвак, хураскерсем...
Ĕненĕр:
ПУРĂНĂÇ вăл — чи малтанах — КУÇСЕМ.

Кайри — мала...
Килетпĕр те каятпăр...
Бульдозер-Вăхăт вырăн хатĕрлет
Куçсем çинче, Сăнсем çинче, Йăл-Кулăсем çинче,
    Шанчăксемпе Ĕненӳсем çинче
ÇĔННИ валли.
Çул парăр ÇĔННИНЕ!

Никам та çӳремен кичем чиркӳ...
Бульдозер хырса кайнă тунсăхлă тӳрем...
...Кунта тахçан кĕрленĕ Пурнăçа

Тӳпе
хӑй ытамне
илнӗ пулинччӗ.

*16.08.93*

## ХУЛА: ÇУРÇӖР ХЫÇÇӐН

*Натиск сил тьмы на земное человечество никогда не был так силен и не грозил столь грозными бедствиями, как сейчас.*
«7 ВЕЛИКИХ ТАЙН КОСМОСА» кӗнекерен

тӗлӗрет
Хула
ывӑннӑ
Хула

ЫРӐ
тӗлӗрет

тӗлӗрмест
УСАЛ

мӗн тери ансат! —
тейӗ айванни —
тӗлӗрет Хула
ывӑннӑ Хула

мӗн тери ансат! —

çук çав
ансат мар:

ЫРӐ — тӗлӗрет
тӗлӗрмест УСАЛ

*06.03.94*

## АЛЕКСАНДР ВОЛКОВА АСĂНСА

Эпир ахаль те йышлă мар.
Шăпамăрсем — каварлă.
Каçар, тăванăмăр, каçар...
Пуçне усать Тăванлăх.

Пуçра — пĕртен-пĕр ыйту çеç:
Кам ăнлантарĕ — м ĕ н ш ĕ н?
Ăçта каятăн эс, чĕкеç?
Ăçта çитсе ÿкесшĕн?

Ĕнтĕ сĕм тĕттĕм Каç пире
Пурне те кĕтсе илĕ.
Кĕл тăвĕç кивĕ чиркÿре.
Тулашĕ çурçĕр çилĕ.

Ĕнтĕ никам та юлас çук.
Çапах та мĕншĕн, мĕншĕн
Маттурисемшĕн эс, Куккук,
Уç сассуна шеллетĕн?

*16.12.91*

* * *

Вăл
ĕненнĕ
сĕм çĕрле
тӳпере хĕвел çиçнине.
Вăл
ĕненнĕ
хĕлле
пахчара улмуççи çеçке çурнине.

Вăл ĕ н е н н ĕ.

Çавăнпа
улталанă
ăна.
Çавăнпа
улталаççĕ
ăна.

*1988*

* * *

Çĕр çул пурăнасчĕ,
Çĕр çул юратасчĕ,
Çĕр çул, ывăнмасăр,
Ĕçре тар тăкасчĕ!
Пин хут çураласчĕ,
Пин хут ман вилесчĕ...
Çапах та нихçан та
В и л е пулас марччĕ!

Çунасчĕ вутра та,
Путасчĕ шывра та.
Кĕрлетĕрччĕ çеç
    манăн пурнăç
        манра.
Çӳле хăпарсан та,
Ӳксе салансан та...
Туясчĕ
    хама
        яланах
Пурнăçра!

*1982*

## ВЛАДИМИР ТЯПКИНА

Эп — Хырай Ёнел чăвашĕ.
Эсĕ — Шашкартан.
Эп — «анатрисен» тавраш̆ĕ.
Эсĕ — «вирьялтан».

Ачаран санпа — мăн Атăл.
Манпала — Кĕтне.
Пĕр пекех эпир саватпăр
Аттесен çĕрне.

Шашкарта пуплеççĕ, паллă,
Кăшт шашкарларах.
Ку — аван. Капла Чăвашлăх
С ĕ м ĕ пуянрах.

Шашкарта та, Ёнелре те
Пур-ха Чăвашсем.
Кам калать: «Чăваш Юманĕ
Пурнас çук!» — тесе?

Эп — Хырай Ёнел чăвашĕ.
Эсĕ — Шашкартан.
Эп — сан тăвану, юлташăм.
Эсĕ — ман тăван!

*30.08.93*

## РЕНЕ КАЛАНДИАНА

эс килтĕн те
Рене
мана çĕр çумне пăталанă кичемлĕх
ишĕлчĕ те анчĕ

эс килтĕн те
Рене
ман чунăмра çиçĕм çиçрĕ

пĕлетĕп:
хăвна çуратнă Грузие
Рене
эс нихăçан нимпе те улăштармăн
ЭС ГРУЗИСĔР ПАЧАХ ТА ÇУК!
ЭС ГРУЗИСĔР ПУЛМА ПУЛТАРАЙМАСТĂН!

анчах — мерттес сана тăванăм —
эс Чăваш Ен Чунне те ăнланайрăн
курма пултартăн
в ă х ă т х у ш н ă р а н
сивĕ кĕлпе пĕркеннĕ пирĕн К ă в а р а

вара каларăн:
КУ КĂВАР НИХÇАН ТА СЎНЕС ÇУК!

эс килтĕн те
Рене
чуна аçа çаптартăн

эс килтĕн те
Рене

*1990*

* * *

Чăвашла калаçрăн та —
Чунăм савăнчĕ.
Ырăрах санпа
Пулассăм килчĕ.
Яланах манпа
Чăвашла калаç.
Тăвана савнă пек
Эп юратăп сана.

*1982*

## МИТТА ВАÇЛЕЙНЕ ПУÇ ТАЙМА УН ТĂВАН ЯЛНЕ ÇИТСЕ КИЛНИСЕНЕ АСА ИЛНИ

Митта патĕнче — Арапуçĕнче.
Пуш уйăх пуçламăшĕ.
Янкăр тӳпе.
К у н  п е к  шăплăх эпĕ илтмен халиччен.
Ку шăплăх халь пирĕншĕн Реквием пек.

Поэзи...
Поэт...
Пин-пин этемрен
П ĕ р и  çеç илтет çак сăваплă ята.
Поэт çын чунне ăшăтать сивĕре.
ЭС ÇУК ТА, ТĔНЧЕ СУЛХĂНРАХ ХАЛЬ, МИТТА.

Арапуçĕнче,
Митта патĕнче.
Масар. Вилтăпри. Йĕкĕр хурăн. Карта...
Хĕвел пек сăваплă Сăнар умĕнче —
Чăваш Арĕсем... тата çамрăк Митта.

*01.03.93*

## ÇИЛ

...и çил вĕрет
çил вĕрет
çил çĕклентерсе ярать...

Çил çĕклентерсе ярать

Çил — Çĕкленӳ
Çил — Аркату
Çил — Тасату
Çил — Çĕнетӳ —
кил!

*1988*

* * *

Пуçлăхсем суяççĕ.

Суйманнине
лартмаççĕ
пуçлăха.
Суйманнине
яраççĕ хăямата.

Суйăр, суйăр, пуçлăхсем!
Сире
суйма
çуратнă.
Пире —
чăтма
тата —
эсир
ултавăрпа
чыхăннине курма.

Эпир
сире
шеллетпĕр,
пуçлăхсем.
Сире
эпирех
шеллетпĕр.

*1989*

* * *

*Митта Ваçлейне*

суя кермен

суя çăтмах

ытти йăлтах чăн-чăн:

йĕп-пралуклă карта — чăн-чăн
урнă йытă-качка — чăн-чăн
урари тимĕр тăлă — чăн-чăн
шăнса кӳтнĕ чунсем — чăн-чăн
веççĕр-хĕрсĕр юн тинĕсĕ — чăн
пуç шăмми сăрчĕсем — чăн-чăн

ерипен тавăру çывхарни — чăн-чăн

*1989*

## АКĂШСЕН ЮРРИ

### *Пĕчĕк реквием*

I

Вĕçрĕмĕр эпир, вĕçрĕмĕр.
Нумай-нумай эпир вĕçрĕмĕр,
вĕçрĕмĕр.
Çĕнтĕмĕр эпир, çĕнтĕмĕр,
никам çĕнмен çиле çĕнтĕмĕр,
çĕнтĕмĕр.
Ӳкрĕмĕр эпир, ӳкрĕмĕр,
сивĕ тинĕссене ӳкрĕмĕр,
ӳкрĕмĕр.
Пĕтрĕмĕр эпир, пĕтрĕмĕр,
хумсен айне пулса пĕтрĕмĕр,
пĕтрĕмĕр...

II

Тинĕсĕсем кăвак —
çӳлтен пăхсан.
Анса ларăттăмăр —
хумсем кăра.
Ĕçĕттĕмĕр шывне
ăш хыпнăран —
Шывĕ тăрă,
анчах — çара тăвар.
Çыранĕсем çывăх —
пĕрре пăхсан.
Ăрша вылять
сенкер тусем çинче.
Çывăххи те инçе,
халран кайсан...
Тинĕсе ишĕлсе анать Тĕнче.

### III

Пӗлӗтсем
пире
кӗтеççӗ.
Пӗлӗтсем
пире
чӗнеççӗ
Çӗнӗрен
çунат сарма...
Пӗлӗтсем
тӗксӗмленеççӗ.
Пӗлӗтсем
хуллен вӗçеççӗ
Хум çинчи
шур тӗк тавра.

*1987*

## ÇУРТ ИШĔЛЕТ

Çурт ишĕлет.
Çынсем
Пăхса тăраççĕ.
Çурт ишĕлет.
Тусан вĕçет.
Мачча кашти
Шарт хуçăлать.
Шĕкĕсене тусан
Хуплать.
Çурт ишĕлет.
Кивелнĕ çурт.
Пĕренесем кусаççĕ,
Айккинелле тараççĕ.
Кантăкĕсем ванаççĕ,
Пин ванчăка куçаççĕ.
Çурт ишĕлет.
Çынсем
Пăхса тăраççĕ...

*1981*

## ПУКАН

Эп — пукан.

Ман çинче
лараççĕ.
Манран
ыйтмасăр.
Малтан — пĕри.
Унтан — тепри.
Унтан — тата тепри...

Ман çинче ларнă чух
в ĕ с е м
пĕр тĕрлĕ.
Ман çинчен ансан —
тепĕр тĕрлĕ.

Эп — пукан.
Ман çине ларма
манран
ыйтмаççĕ ирĕк.

*1989*

## ÇУЛÇӲРЕВ

çĕршыв-шăмăсем

шăмăсен çĕршывĕ тăрăх

шăрăх

шăмăсем —
шурă-
шурă-
шурă

шăмăсен çĕршывĕ урлă

эй
ТУРĂ!!!

шăп

ТУРĂ вилнĕ

шăмăсем çеç
юлнă

*1988*

* * *

*Арçук Тарасова*

Мĕн хак эс, çын,
совет çынни,
«ахаль совет çынни»?
Пĕр пус-и?
Е çур пус кăна?..
Хăçан эс илĕн ăнланса
хăв кив пăта,
е ĕç лаши,
е кирлĕ чух усă курмашкăн
кирлĕ
хĕç çеç маррине?
Хăçан эс илĕн ăнланса
хăв Çын ятне, Çын хисепне
тивĕçлине?

Мĕн хак эс, çын,
совет çынни,
«ахаль совет çынни»?

Эс кам?
Тен, эсĕ —
вĕççĕр хÿмери пĕр кирпĕч?
Тен, эсĕ — чул,
таканлă атăсем валли
сартарнă çулăн чулĕ?
Тен, эс шутлатăн
«чиҫ пахи — çул-йĕр пурри» тесе?
Анчах — ăнлан — çулсем вĕсем
пулаççĕ тĕрлĕрен.
Мĕн хак эс, çын,
совет çынни,
«ахаль совет çынни»?

Тен, кăткă та хăй йăвинче
санран хисеплĕрĕх?
...Пулла чикеççĕ каткана.
Сана — автобуса,

сана чикеççĕ вагона,
эс *ч и к ĕ н м е* те *х ĕ с ĕ н м е*
пултарнине кура.
Эс мĕн çисе чунна усран?
«Кильки» консерва туянсан,
телейлĕ мар-и эс?
«Юрать-ха çăкăр пур», — тесе
хăвна хăв йăпатан.

Ĕçетĕн эсĕ.
Пур-çук укçу каять ĕçме.
Пуçна эрех минретсен тин
*ç ы н п е к* туятăн эс хăвна
пĕр хушă.
Анчах çакна хăнăхманран
каллех ĕçсе лартатăн та...
Вара...

Мĕн хак эс, çын,
совет çынни,
«ахаль совет çынни»?
Хăçан эс илĕн ăнланса
хăв кив пăта,
е ĕç лаши,
е кирлĕ чух усă курмашкăн
кирлĕ
хĕç çеç маррине?

*1989*

# УТӐМ ХЫҪҪӐН УТӐМ

*Паянхи марш*

*Ю. Кошелева*

Утӑм хыҫҫӑн утӑм —
Ирӗклӗх енне!
Утӑм хыҫҫӑн утӑм —
Ҫӑлӑнӑҫ патне!

Эпир — сӗмсӗр халӑх мар!
Эпир вӑйсӑр мар!
Эпир — чухӑн халӑх мар!
Эпир — мӗскӗн мар!

Эй, чӑваш хӗрарӑмӗ!
Санӑн куҫунтан
Пуласси пӑхать паян
Пулӑшу ыйтса.
Санӑн ывӑлу-хӗрӳ
Чӑвашла пӗлет-и?
Ашшӗ-амӗш чӗлхинчен
Татӑлса ӳсмест-и?
Санӑн ывӑлу-хӗрӳ
Тӑван халӑха
Ыр сунмашкӑн, юратма
Хӑнӑхса ӳсет-и?

Утӑм хыҫҫӑн утӑм —
Ирӗклӗх енне!
Утӑм хыҫҫӑн утӑм —
Ҫӑлӑнӑҫ патне!

Эпир — сӗмсӗр халӑх мар!
Эпир вӑйсӑр мар!
Эпир — чухӑн халӑх мар!
Эпир мӗскӗн мар!

Эй, чӑваш пуҫлӑхӗсем!
Пуҫлӑхра ларатӑр,
Тӑван халӑхшӑн ыр ӗҫ
Тума шутламастӑр.

Мускаври хуçăрсенчен
Хăраса пурнатăр.
Пуçлăхран кăларсанах
Хăмпă пек шăтатăр.
Эй, чăваш пуçлăхĕсем,
Халăха ан сутăр!
Тăван халăх пĕрре çеç,
Ăна ырă сунăр!

Утăм хыççăн утăм —
Ирĕклĕх енне!
Утăм хыççăн утăм —
Çăлăнăç патне!

Эпир — сĕмсĕр халăх мар!
Эпир вăйсăр мар!
Эпир — чухăн халăх мар!
Эпир мĕскĕн мар!

Эй, чăваш яш-кĕрĕмĕ!
Хулара, ялта
Пурăнатăн эс паян,
Улшăну кĕтсе.
Эй, чăваш яш-кĕрĕмĕ!
Тĕлĕрсе çитет!
Тимлесем: Чăваш Тĕнчи
Çывхарса килет!
Эй, чăваш яш-кĕрĕмĕ!
Йĕкĕтсем, хĕрсем!
Ирĕке тухас тесен,
Кĕрешмех тивет!

Утăм хыççăн утăм —
Ирĕклĕх енне!
Утăм хыççăн утăм —
Çăлăнăç патне!

Эпир — сĕмсĕр халăх мар!
Эпир вăйсăр мар!
Эпир — чухăн халăх мар!
Эпир мĕскĕн мар!

*1990*

# ПЕХИЛ

*Н. Панферована*

Пехил сана, Чăваш Тĕнчи!
Мухтав сана, Чăваш Тĕнчи!

Ăçта çитен, унта — чăваш.
Ăçта çитен, унта — юлташ.
Кĕрлет Тĕнче — Чăваш Тĕнчи —
Тӳпе пек чикĕсĕр Тĕнче.

Чăваш Тĕнчи, Чăваш Тĕнчи!
Мухтав сана! Пехил сана!

Эс — Пушкăртран? Эп — Чĕмпĕртен!
Эс — Самартан? Эп — Çĕпĕртен!..
Чăвашшăн çук çич ют чăваш.
Эп — сан, эс — манăн хурăнташ!

Чăваш Тĕнчи, Чăваш Тĕнчи!
Пехил сана! Мухтав сана!

Эй, тăвансем, ылтăнăмсем!
Эй, тусăмсем, çăлтăрăмсем!
Мĕн виличчен пĕрле пурнар!
Чăваш Тĕнчишĕн кар тăрар!

Чăваш Тĕнчи, Чăваш Тĕнчи!
Мухтав сана! Пехил сана!

Ăçта çитен, унта — чăваш.
Ăçта çитен, унта — юлташ.
Пурнах, Тĕнчем — Чăваш Тĕнчи —
Тӳпе пек ирĕклĕ Тĕнче!

Пехил сана,
Мухтав сана,
Мерттес сана,
Чăваш Тĕнчи!

*июль, 1993*

## АЛЛА-АЛ ТЫТĂНАР-И, ТУССЕМĔР

*В.Карсакова*

Алла-ал тытăнар-и, туссемĕр —
Çеçпĕл чĕннĕ чăваш ачисем,
Миттапа Хусанкай пехилленĕ,
Элкер кĕтнĕ хастар йĕкĕтсем!

Е çаплах шикленсе пурăнар-и,
«Вăйран вăкăр ан тухтăр», — тесе.
Пуш сăмах хывăхне вĕçтермесĕр,
Пăхар мар-и ĔÇЕ пикенсе?

Куç хăратăр, анчах ал хăрамĕ.
Çиччĕ виçрĕмĕр. Халь касмалла.
Кам Çула тухас тет, çав ăнлантăр:
Çитес тетĕн пулсан, у т м а л л а.

Алла-ал тытăнар-и, туссемĕр!..
Çитет мар-и пире тĕлĕрсе?
Çĕр-анне пире тӳсĕм пиллетĕр!
ÇУЛ кăтарччăр пире Турăсем!

*1990*

* * *

Туйра туйри пек пулăр, чăвашсем!
Пумилккери пек шăппăн ан ларсамăр.
Ватти-вĕтти, сар пикесем, яшсем,
Çĕн мăшăра тулли телей сунсамăр!

Эй, вăйăç, тăсса яр-ха купăсна!
Чи паттăрри пуçлатăр çĕнĕ ташă.
Ку пурнăçра эпир — хăна кăна...
«Асса!», тăванăм, хаклă хурăнташăм!

— Эх, еплерех чипер пирĕн инке!..
— Ачи-пăчи те хăйĕн пек пулинччĕ!..
— Кĕрӳ тата?.. Кĕрӳ хăй мĕнешкел!..
— Ĕçки кăна, ĕçки кăна пĕлинччĕ!..

Эй, тăвансем, эй, ыр хăна-вĕрле,
Пиртен тухман сăваплă йăласенĕн
Сумне ямасăр, пурăнар пĕрле!..
Айăп ан тăвăр ытларах «хĕрсессĕн»!

Туйра туйри пек пулăр, чăвашсем!
«Кун пек туй халиччен пулман-ха!» — теччĕр.
...«Чăваш пĕтет-тĕр...» — теççĕ пĕрисем.
Эпир вара ĕрчетпĕр те ĕрчетпĕр.

*28.06.93*

## НИМЕ

*Н. С. Егорова*

Ялта — ниме.
Хӗрӳ ӗҫ шавӗ.
Йӑтаҫҫӗ кирпӗч. Тӑм ҫӑраҫҫӗ.
Пӗр хушӑ шӑп ӗҫленӗ хыҫҫӑн
Ахӑлтатса кулса яраҫҫӗ.

Ялта — ниме.
Ниме пӑхмасӑр
Хресчен пикеннӗ ҫурт тумашкӑн.
Ҫурт тӑвасси ансат ӗҫ мар вӑл.
Васкар, апла-тӑк, пулӑшмашкӑн!

Ялта — ниме.
Асаттесенӗн
Ыр йӑлине асран ямасӑр
Пурнасшӑн, п у р ӑ н а т ь ман халӑх.
Епле чӑтас ман савӑнмасӑр!

Ялта — ниме
Эй, паттӑр халӑх,
Мана та ӗҫ хушсам, тархасшӑн!
Таса хута хуратнӑ хыҫҫӑн
Йышпа пӗрле эп тар тӑкасшӑн.

Ялта — ниме.
Хӗрӳ ӗҫ шавӗ.
Йӑтатпӑр кирпӗч. Тӑм ҫӑратпӑр.
Ӑҫта тата камсем — мӗнле-тӗр...
ЭПИР ПУРНАС ТЕСЕ ПУРНАТПӐР!

*18.05.93*

# ÇИЧĔ КĔЛĔ

I

Эй, Турă!
Эс çук тесе мана ĕнентеретчĕç.
Сана ĕненнипе
Сана ĕненнине пытарманни хăйех —
кăвар çине çара уран пусниччĕ,
элчел çитниччĕ.
Эй, Турă!
Ку тарана çитсе,
мана
темиçе çын кăна
«Турă çук» темерĕ.
Çав çынсенчен пĕри вăл —
ман анне.
Тăссам ун ĕмĕрне,
эй, Турă!

II

Эй, Турă!
Чĕрем ытла ыратнăран,
пуласлăхăм уçăмсăртан
сăмахăма тата хушам-и?
Эй, Турă,
манăн килйыша —
хĕрĕмсемпе мăшăрăма —
сывлăхпала тӳлеклĕх парччĕ.
Вĕсем курас хĕн-асапа
йăлтах ман тӳсмелле тусамччĕ.
Ытла черченкĕ-çке вĕсем.
Пулас пекки ытла та ăмăр...
Упра ман килйыша,
эй, Турă!

III

Эй, Турă!
Юлташсем пуртан,
вĕсем мана ĕненнĕрен,
тĕрĕссине куçран каланăран,
вĕсем ялан манпа юнашартан,
çак тарана çитсе,
эп чунăма сутман.
Эй, Турă,
манăн тус-юлташ
ялан таса та ырă пултăр,
ун пархатарлă ĕçĕ ăнтăр,
утас сукмакĕ вăрăм пултăр.
Упра ман туссене,
эй, Турă!

IV

Эй, Турă!
Сан таса ятна
ман халăх сĕм авалтанпа
хăй чĕлхипе калать.
Анчах ыран е виçмине
Эс, тен, илтеймĕн
Сан ятна
ман халăх хăйĕн чĕлхипе каланине.
Ман халăх —
çурхи юр утравĕ —
ирĕлнĕçемĕн ирĕлет.
Чăваш Сăмахĕ — килсĕр йытă тейĕн:
кам ўркенмест, ăна чулпа перет.
Эй, Турă,
каласам мана:
кам умĕнче ман халăх айăплă?
Кама хур тунă вăл?
Кам ĕмĕтне вăл татнă халиччен?
Кама çаратнă, пусмăрланă?..
Чĕнместĕн?!
Апла пулсассăн, ма унран кулаççĕ?
Ма унăн ĕмĕтне хăртаççĕ, типĕтсе?
Ма унăн Сăмахне
çĕре чавса чикме васкаççĕ...
вилсе çитичченех?..

Эй, Турă!
Çăлсам ман халăха!

V

Эй, Турă!
Тинĕсре, пăрсен тыткăнĕнче,
карап путать,
вышкайсăр пысăкскер.
Путма пуçланă çав карап —
Çĕршывăм манăн,
тахçан суя-çыран енне
çул тытнăскер.
Эй, Турă,
ан пăрах ăна!
Путма ан пар ăна!
Нумай ун çылăхĕ.
Пĕрех,
вăл тӳснине шута илсе те
каçарса,
Эс шанчăк пар ăна,
ун шăтса пĕтнĕ парăсне
çилпе тултар.
Тен, малалла ăнтăлнăçем,
вăл тупĕ тĕрĕс Çул.

VI

Эй, Турă!
Вĕççĕр-хĕрсĕр уçлăхра
пирĕн Çĕр — тусан пĕрчи кăна.
Эй, Турă,
пирĕн Çĕр çинче —
ăçта пăхан, унта —
инкек, куççуль, асап.
Анчах та çакă çитмен пек
эпир çавах вутпа вылятпăр.
Ак халь ĕнтĕ Çĕре хăйне
вут-авăра пеме васкатпăр.
Эй, Турă!
Ăса кĕртсем пире!

Çĕрĕмĕрпе пĕрле çунса пĕтме
ан пар пире,
эй, Турă!

## VII

Эй, Турă!..
Сăмахăм манăн
Юрату пирки.
Юратусăр
эпĕр —
хăрнă хунавсем.
Юратусăр
эпĕр —
типнĕ çăлкуçсем.
Юратусăр
эпĕр —
хуçăк çунатсем.
Юратусăр
эпĕр —
сив кĕлпе тусан...
ЮРАТĂВА
çак Çĕр çинчи
чи аслă вăй тусам,
эй, Турă!

*1989*

## ШĂПЛĂХ КĂВАЙЧĔ

*Ю х т а р ă м а*

Шăплăх кăвайчĕ

Чăнлăх саманчĕ

Тупсăм саманчĕ

. . . . .

. . . . .

. . . . .

*16.06.93*

* * *

к а й ма
х а т ĕ р л е н м е ш к ĕ н
эпĕ
килнĕ

эп пурăнатăп
х а т ĕ р л е н с е
к а й м а

. . . . . . . .

*30.XI.93*

* * *

*А. Леонтьева,*
*«Хыпар» хаҫат редакторне*

«Эпир ҫӗнтеретпӗр!»
Ҫак икӗ сӑмах,
Туссем, сире патӑр вӑй-хал яланах.
Эпир ҫӗнтеретпӗр!
Ку — пирӗн тупа.
Ку — вилӗмсӗр шанчӑк. Ку — пирӗн шӑпа.

Эпир ҫӗнтеретпӗр!..
Чура сӑнчӑрне
Татса вӑркӑнтарӑр Иртнин аварне!
Пире сахал мар хӗн кӑтартрӗ
Кунҫул.
Эпир сахал мар тӑкнӑ юн та куҫҫуль.

Эпир ҫӗнтеретпӗр!
Чӑваш Тӗнчине
Парсам, аслӑ Турӑ, вӑл мӗн ыйтнине!
Пире кирлӗ Ирӗк,
Пуласлӑх, Телей.
Тата... ӗмӗрех пурӑнасчӗ пӗрле.

Эпир ҫӗнтеретпӗр!
Кам иккӗленет,
Ҫав юлтӑр тӑрса аслӑ ҫул хӗррине.
Эпир утас ҫул
Ҫӑмӑл пулмӗ, туссем.
Апла мала тӑччӑр чӑн-чӑн паттӑрсем.

Эпир ҫӗнтеретпӗр!
Эй, хӑшӗ унта
Кая тӑрса юлнӑ, аран ҫеҫ утать?..
Эпир ҫӗнтеретпӗр!
Ку — пирӗн тупа.
Ку — пирӗн пуласлӑх. Ку — пирӗн шӑпа.

*03.01.93*

# ШĂЛЛĂМĂРСЕНЕ

*Н. Христофорова*

*Парсан — илетпĕр,*
*çапсан — таратпăр.*
Халăх сăмахлăхĕнчен.

Çапсан... тармастпăр.
Панине илетпĕр.
Ç а к н а сире те,
Шăллăмсем, сĕнетпĕр.

Çапсан — тармастпăр.
Мулкачсем-им эпĕр?
Пĕтсен, пĕтетпĕр —
Я т с е н е çĕртместпĕр.

Пĕрре пурнатпĕр.
(Тен, пĕрре çеç мар-тăр).
Арçын тени вăл
Яланах Ар пултăр.

Арçын тени вăл
Шик мĕнне ан пĕлтĕр.
Вилсессĕн — вилтĕр,
Найкăшмасăр вилтĕр.

Пĕртен-пĕр пурлăх
Çĕр çинче пур — Ирĕк.
«Чура пулмастпăр!» —
Тĕп тĕллев ку пирĕн.

Çапсан — тармастпăр.
Панине илетпĕр.
Ç а к н а сире те,
Шăллăмсем, сĕнетпĕр.

*30.12.93*

# ЭС МАНА КĂШТАХ ТА ШЕЛЛЕМЕСТĔН



* * *

Арапуç
хĕрне
эп
арăм
турăм.
Арапуç
пики
халь
манăн
Турă.

*(15.07.92 ç.)*

* * *

Хăяймастăп санпа тĕл пулма.
Эс — Хĕвел.
Сансăр Пурăнăç çук.
Эс — Хĕвел.
Сан патна юрамасть çывхарма.
Эс... питĕ шел... Хĕвел...

*(03.01.93.)*

* * *

Мана савсан,
ман килĕме те сав.

Мана савсан,
ман аннене те сав.

Мана савсан,
ман ĕçĕме те сав.

Мана савсан,
ман ĕмĕте те сав.

Мана савсан,
хăвна та
манран кая ан сав.

*(1981)*

* * *

Савниçĕм, ытла мана,
Тинкер ман куçăмран.
Унта эс курăнах хăвна —
Эс çеç ман асăмра.

Савниçĕм, ачашла мана,
Эп антăхса каям,
«Телейĕм манăн — эс кăна», —
Тесе пуçа таям.

Кала, кала: «Ĕмĕрлĕхе
Пулатпăрах пĕрле...»
«Ĕмĕрлĕхе, ĕмĕрлĕхе!» —
Хуравлĕ ман чĕре.

*(1981)*

* * *

эп утрав
эс тинĕс
　　ăшă тинĕс
эп чулланнă
　　пушă та кичем
эс ачаш шевлесемпе çиçетĕн
　　ăш хумсем ярса ман çырана
эс каллех ман ыйăха сиресшĕн
эс мана пайласшăн телейне

эс çакна çеç темшĕн ăнланмастăн
　　эп утрав
эп сан тыткăнунта

*(1986)*

* * *

Ӑнланмарӑн.
Ӑнланма та тӑрӑшмарӑн...
Эп сана шеллеп, мӑнтарӑн.
Эс паян нумай ҫухатрӑн.
Эс паян
мана
ҫухатрӑн.

*(03.12.93)*

* * *

Чылай пулать эп йӗменни, чылай.
Иккен куҫҫуль — тӑварлӑ, пылак мар.
Мӗн чухлӗ ыйтрӑм — тилмӗртӗм: «Ан кай!..»
Тен, тилмӗрме пӗлмерӗм-тӗр. Каҫар.

Арҫын куҫҫулӗ... Кам калать: «Арҫын
Йӗмест, ун юрамасть йӗме», — тесе?
Йӗрет арҫын. Йӗрет. Арҫын та — ҫын.
Арҫыннӑн шултрарах куҫҫулӗсем.

Мӗн чухлӗ ыйтрӑм-тилмӗртӗм: «Ан кай!..»

.................................................................

*(04.12.93)*

* * *

Шăнкăравламарăн.
Шăнкăравламарăн...

Вăхăту пулмарĕ пуль.
Е
телефонсем
ĕçлеме пăрахрĕç-ши
пĕтĕм тĕнчипе?

Шăнкăравламарăн.

Телефонсемех
ĕçлеме пăрахрĕç-тĕр
пĕтĕм тĕнчипе.

*(19.XI.93)*

## ШИКЛЕНЕХ. ШИКЛЕН...

Шикленетĕн?
Шикленетĕн.
Шикленех.
Шиклен.
Малашне мана, тархасшăн,
эс ан ÿпкеле.
Эпĕ  х а т ĕ р ч ч ĕ.
Эп  с а н ч ч ĕ.
Эп сана кĕтни...
Шанчăка чăл-пар аркатрĕ
Эс  ĕ н е н м е н н и.

Шикленетĕн?
Шикленетĕн.
Шикленех.
Шиклен.

*(16.XI.93)*

* * *

Çак тĕлпулу...
Çак тĕлĕнтермĕш...
Мĕн чухлĕ кĕтнĕ эп ăна!..
Паллах, эп мар, эп мар —
п ĕ р р е м ĕ ш...
Тен, эпĕ — ю л а ш к и те мар...
Çапах...
Çапах та, мур илесшĕ,
АВАН ХĂВНА Ç Ы Н ПЕК ТУЙМА
Вăхăтлăха кăна пулин те...

*(27.09.93)*

## Ю Р А Т У ĂÇТА?

Эс мана паян каларăн
«Эпĕ — сан», — тесе.
«Эп те — санăн», — терĕм эпĕ,
Эс к а м н е пĕлсе.

М а н п е к к и сан, чиперукăм!..
Ман та пур к ă ш т а х...
...Эпĕ — санăн...
Эсĕ — манăн...
Ю Р А Т У ăçта?

*(05.01.94)*

* * *

Тĕттĕмлĕх анчĕ ялăм çине,
Çутă çуттарчĕ кил хуçине.
Йк çутă лаптăк ўкрĕ çĕре.
Ик çутă куç тем кĕтет тĕттĕмре.

Тĕттĕмлĕх анчĕ ялăм çине.
Карчĕ пике чўрече каррине.
...Усăнчĕ пуçĕ çамрăк ачан.
Ик çут куççуль юхса анчĕ куçран.

*(1983)*

## КАÇАРСАМ

Кӳрентертĕм пулсан — каçарсам.
Каçармастăн пулсан — ятласам.
Ним чĕнмесĕр кăна ан ларсам.
Калаççам, чун савни, калаççам.

Итлесем, чун савни, итлесем:
Путене чĕппине йыхăрать.
Кăвакарчăн тусне чуп тăвать...
Ĕненсем, чун савни, ĕненсем.

Каласам, чун савни, каласам:
Мĕншĕн хăмăр куçу хĕм сапать?
Мĕншĕн ман чĕрене çунтарать,
Чун савни, эс кӳреннĕ самант?

Кӳрентертĕм пулсан — каçарсам.
Каçармастăн пулсан — ятласам.
Чĕмсĕр çеç, савнă тус, ан ларсам,
Калаççам, калаççам, калаççам...

*(1983)*

# ТУМЛА

сан ыйхăллă çӳçӳн
черченкĕ пĕрчисем çинче вылякан хĕмсем
сан Сăнарна
витĕр курăнакан хĕлхем-пĕркенчĕкпе
витеççĕ
сан хăмăр куçун
хăрăм пек хура хăрпăкĕсем
мăшăр куçу куççулленме пикеннине туйса
йывăрлăхпа тулмашкăн пикенеççĕ
сан
кĕлленсе пĕтичченех ялкăшса çунма шут тытнă
вутпуççин кăварĕ пек вĕри туту
ман никам та чуп туманран
кушăрханнă тутана
перĕнет
. . . . . . . .
. . . . . . . . . . .
пирĕнпе юнашар
тин килсе çитнĕ Çуркуннен вылянчăк çутине
ним хăварми хăйĕнпе пĕрле илсе кайма шут тытнă
пĕчĕкçĕ тумлам
хура тăпра çинчи йăлтăркка пăр тĕмески çине ӳкет

*(1984, 1993)*

# ИЛЕМПИ

Чĕппĕм манăн, Илемпи,
эсĕ — манăн çутă куллăм,
эсĕ — манăн ăш хыппи,
чĕппĕм манăн, Илемпи.

Чунăм манăн, Илемпи,
эсĕ — манăн савăк юррăм,
эсĕ — ман чĕре таппи,
чунăм манăн, Илемпи.

Хĕрĕм манăн, Илемпи,
эсĕ — ман шалти тĕрекĕм,
эсĕ — ман Кăвак Хуппи,
хĕрĕм, чĕппĕм, Илемпи.

*(1987)*

## НЕСПИКЕ

*Натали кĕпе тĕрлет.*
П. Хусанкай.

Неспике кĕпе суйлать.
Кĕписем
Пĕринчен тепри илемлĕ
Неспикен.

Ак — кĕрен кĕпе. Кунтах —
Кăвакки.
Çеçкелли те илĕртет
Çав тери.

Шалт аптранă Неспике
Тĕкĕртен
Питĕ тимлĕн, тăрăшса
Тинкерет.

Пирĕн пĕчĕк Неспикен,
Хĕр чĕппин,
Пуласси килет тата
Хитререх.

Неспике кĕпе суйлать.
Кĕписем
Хăй пекех илемлĕ, капăр
Неспикен.*

*(23.05.93. Чĕмпĕр.)*

* Неспике — Ленăпа Олег Мустаевсен тăватă çулхи ытарма çук чипер хĕр ачи.

юратнине
пула
курраймастăп

курайман чухне те
юрататăп

*(1989)*

* * *

Эп сана Тасалăх парнелесшĕн,
Парнелесшĕн Çутă та Илем.
Эп сана, ман Шанчăкăм, Ултавăм,
Т у р ă ш пек курма ĕмĕтленеп.

Эп сана, ман Савăнăçăм, Тертĕм,
Туйтарасшăн хам м ĕ н т у й н и н е.
Эп пĕлеп: эс халлĕхе пĕлместĕн,
Ан кўрен те, э п ĕ пĕлнине.

Эп сана Çĕн Пурнăç парнелесшĕн.
Ман парне вара сана...
Каçар...

*(29.12.93)*

* * *

Çумăр çунă чух
Эс килтĕн ман пата.
Тумламсем чĕтрерĕç
Кăтрусем çинче.

Çумăр çунă чух
Эс пăхрăн ман куçран.
Çумăрпа пĕрлешрĕ
Йăлтăркка куççуль.

Çумăр çунă чух
Эс ыйтрăн каçару.
Урамри шур хурăн
Тĕслĕччĕ сăну.

Çумăр çунă чух
Курăнчĕ и р т н и:
Сан мăнаçлăху...
Мăнкăмăллăху...

*(1986)*

* * *

Тунсăх, сивĕ тунсăх —
Санăн куçунта.
Сивĕ, питĕ сивĕ
Сан ытамунта.

«Пур арçын та чунсăр, —
Тетĕн эс мана. —
Асăрта пурин те —
Пĕр тĕллев кăна.

Сирĕншĕн хĕрарăм —
Пуканне кăна.
Йăлăхсан, манатăр
Çийĕнчех ăна».

Тунсăх, сивĕ тунсăх —
Санăн куçунта.
Тăвăр, питĕ тăвăр
Сан ытамунта.

*(1991 ç., июнь)*

# АСӐРХАТТАРУ

Хитре.
Ҫавна пула
хӑрушӑ.
Айван.
Ҫавна пула
тата хӑрушӑрах!

*(27.06.93)*

* * *

эс маншӑн халӗ кивӗ укҫа пек

тахҫан эс х а к л ӑ пулнӑ

эс хаклӑ халӗ те

ҫапах та эс а х а л ь х у т кӑна мар

*(13.12.93)*

# ШАНЧĂКĂМА

Эп пĕлнĕ эс килессине.
Паллах, эп пĕлнĕ!
Кун чул кĕтсен те килмесен...
Хĕвел те сӳнĕ!

Эп пĕлнĕ эс килессине.
Эс килтĕн, килтĕн!
...Ах, еплерех
к и л м е н п у л с а н,
Эс ӳкĕнеттĕн!..

*(16.09.93)*

* * *

к ĕ м ĕ л хĕрес
эп сана парнелерĕм

к ĕ м ĕ л хĕрес
санăн к ĕ м ĕ л ӳтне
перĕнчĕ те...
х ĕ м л е н м е
эс пуçларăн

...Турă
КУ ХĔР —
М А Н Ă Н!
терĕ пулас

*(19.01.94)*

## ÇĂЛТĂР

Тĕттĕмре тивсе çуталнă Çăлтăр
ÇУЛ кăтартрĕ ĕнтрĕкре мана.
К у н  п е к çутă Çăлтăр эп курманччĕ.
Çут тĕпренчĕкĕм, тавах сана!

Тем тесен те Çĕр çинче Асамлăх
Пур. Пурах!.. Кĕтмен-туман çĕртен
Эс ун ытамне кĕрсе ӳкетĕн.
Вара эс теме те çĕнтерен.

Çав Асамлăх, çав Кĕтрет — ИЛЕМ вăл:
Ĕмĕр вилĕмсĕр таса Хĕлхем.
Илеме курми-туйми пулсассăн,
Хăйă евĕр лап сӳнет этем.

Тĕттĕмре тивсе çуталнă Çăлтăр
Ыйхăран вăратрĕ Чунăма.
Вăл хĕмленмесен, çырассăм çукчĕ
Эпĕ, В. Туркай, çак сăввăма.

*(06.04.93)*

* * *

Кĕтетĕп. Кĕтетĕп. Кĕтетĕп.
Кĕтсе илейместĕп сана.
Те э п ĕ кĕтмешкĕн пĕлместĕп?
Те э с манса кайнă мана?

Кĕтетĕп. Кĕтетĕп. Кĕтетĕп —
Эс кайнă енне тинкерсе.
Часах ухмаха, ак, йĕретĕп...
Паллаймăп сана, эс к и л с е н.

Эс к и л ĕ н те калăн: «Васкарăм...
Чăрмав нумай пулчĕ ç у л р а...»
Унтан эс шăпланăн та ларăн,
Сăмах тупайми, ман çумра.

Унтан эпĕ вилĕп...
Эп вилĕп.
Тĕтреллĕ салху шăплăхра.
У н ч у х э п я л а н санпа пулăп.
У н ч у х эпĕ пулăп с а н р а...

*(19.01.94)*

* * *

Ун чух эс питĕ ӳсĕрччĕ.
Сана ун чух «до фениччĕ».
Сăлтавсăр эс кулаттăнччĕ.
Унтан эс ĕсĕклеттĕнччĕ.

Кĕпӳ сан йӳле кайнăччĕ.
Çӳçӳ сан сапаланнăччĕ.
Эс такама ятлаттăнччĕ.
Эс такама кĕтеттĕнччĕ.

Сан куçунта — куççулĕччĕ.
Кантăкунта — кив уйăхччĕ.
Эс — тĕксĕмленнĕ çăлтăрччĕ.
Эс — тин тĕлленнĕ тĕлĕкччĕ.

Телейсĕрскер — телейлĕччĕ.
Телейсĕрскер — телейсĕрччĕ.
Мана эс пач курмастăнччĕ.
Ун чух эс, чăн та, ӳсĕрччĕ.

*(11.12.93)*

## ВĂЛ

Çара кăкăрупа эс перĕнетĕн те
ман кăкăра —
çараскере...
Ах, Турăçăм!
Ă ç т а н Эс ятăн
Ă н а —
кĕтсе илме
эп пач сунманскере?!

Тин çеç эс
нӳхрепри сĕт евĕр
сивĕччĕ.
Ак халь эс
çулăмран вĕри...
Ах, Пихампар!
В ă л,
тем тесен те,
чуна илен вутăшсенчен пĕри!..

*(04.01.94)*

* * *

Çӳхе туталлăскерĕм,
Çитет-тĕр чуп туса?
К а п л а тутасăр юлăн.
Пĕр хушă тăхтасам.

Пĕлместĕп: к а м çуратнă
Сана — вут-çулăма.
Никам та çунтарманччĕ
Сан пек ман чунăма.

Çӳхе туталлăскерĕм,
Чуп ту мана, чуп ту!
Пĕр маншăн çеç хĕмлентĕр,
Телейĕм, сан туту.

Пĕр маншăн çеç, илтетни,
Эс пурăн, маншăн çеç!
Эп — çăткăн, питĕ çăткăн:
Мана Телей çитмест.

Мана çитместĕн эсĕ!..
Эп халиччен пĕлмен:
Иккен чăтма çук ырă
Хĕвел енне вĕçме.

Çӳхе туталлăскерĕм,
Çунтар мана, çунтар!
Пĕр каçлăха пулин те
Тунсăхăма мантар!

*(31.12.93)*

* * *

Ç а в  каçхине
ман кантăкран
пăхмарĕ уйăх та —
вăтанчĕ,
ытла аванмарланнăран
кăвак чаршав хыçне
пытанчĕ.

Çав каçхине
савни мана
хăй ытамне илсе лăпкарĕ...

*(1981)*

* * *

пĕрремĕш хут мана эс улталарăн

юлашки хут
утатпăр юнашар

чÿречесем сÿнеççĕ

сивĕ каç
ыйха путма хистет

ыран
татах та пулĕ
Çутă Кун

саншăн

*(31.05.93)*

* * *

*Г. Рубана*

Пĕтĕмпех — сана пула:
Тертĕм те, телейĕм те...
Пĕтĕмпех сана пула.
Эс çакна сисместĕн те.

Ĕнер çеç, ĕнер кăна
Пит ансатчĕ пурнăçăм.
Паян лекрĕм тыткăна.
Вăй парсамччĕ, Турăçăм!

Пĕтĕмпех — сана пула...
Сана — мĕн? Эс — ирĕклĕ.
...Чăт, айван. ЧĂТАС ПУЛАТЬ!
Ак ăçта вăл, Тĕрĕслĕх!

*(06.05.93)*

* * *

Малтан — в ĕ р и ч ч ĕ.
Халĕ — с и в ĕ.
Сӳнмен кăвайт чăнах та çук-ши?
Хăçан, ăçта, кам кĕллентерчĕ
Сан туйăмна?
Хуравласамччĕ!

Ултав, ултав...
Ытла та ырă
У л т а л а н м а ш к ă н.
Тĕлĕкре
        куратпăр та
«Чăн пулнă!» тетпĕр...
Телейсĕртен...
Телейсĕртен.

*(11.09.93)*

# ТЕПРЕ!.. ТАТА ТЕПРЕ!..

Тепре!
Унтан тата тепре!
Унтан тата, тата тепре!..
Атя çак Каç,
кĕçĕрлĕхе
пач шеллеместпĕр пĕр-пĕрне!

Мĕскер кĕтет у н т а —
л е р е —
çăтмах-и, тамăк-и —
пĕрех!
Тепре! Тепре!
Тата тепре!
Унтан тата, тата тепре!

В и л м е эп хатĕр...
ирхине
май пур пулсассăн
ч ĕ р ĕ л м е
мана Эс «ЧĔРĔЛ!» тенĕрен,
мана Эс «ПУРĂН!» тенĕрен...

Тепре! Тепре!
Тата тепре!
Унтан тата, тата тепре!

*(18.01.94)*

* * *

Тăхта!.. Хамах эп салтăнатăп.
Ăçтаваскатăн эсĕ çак?
Пĕлсем: санран кая кĕтмен эп
Симпыл тутиллĕ ç а к Каçа.

Ан хыпалан... Мĕскер вăл, Вăхăт?
Эп кĕçĕр сурнă ун çине!
Эс ман çумра, ман ытамра эс...
Салтах, салат кăкăр çыххине!

Ĕнен мана: вышкайсăр пысăк
Çут тĕнчере çак каçхине
Сана, сана çеç эп пĕлетĕп!..
Тата сана хам савнине.

Эп сан кашни хусканăвушăн
Памашкăн хатĕр Çĕр çинче
М ĕ н п у р р и н е! Памашкăн хатĕр...
М ĕ н ç у к к и н е те çийĕнчен.

Мĕскер вăл, Вăхăт? Мĕн вăл, Вăхăт?..
Эп кĕçĕр сурнă ун çине!
Эс ман çумра, ман ытамра эс...
Никам та пĕлмĕ ы т т и н е!..

*(16.01.94)*

* * *

ылтăн çĕрĕллĕ алă
курăнать ман куçа
ылтăн çĕрĕллĕ алă
ман енне тăсăлать

ылтăн çĕрĕ кăна халь
ылтăн çĕрĕ кăна
урăх нимĕн те çук халь
тĕнче усăлăхĕнче

ылтăн çĕрĕллĕ алă
ылтăн çĕрĕллĕ чун
ылтăн çĕрĕллĕ ĕмĕт

урăх нимĕн те çук

урăх нимĕн те çук

*(14.09.91)*

* * *

Ан шан. Ан кĕт. Ан йыхăр.
Ан çунтарсам чунна.
Пĕлсем: мана та йывăр.
Ман чунăм та çунать.

Чуралăхăм, чуралăх...
Каçар, каçар, каçар.
Ан шан. Ан кĕт. Ан йыхăр.
Савма кăна ан чар.

*(1990)*

* * *

Хывсам, хывсам тумна, пикеçĕм,
Пăрах именчĕклĕн кулма.
Çак саманта кĕтсе пĕр вĕçĕм,
Чунна çунтарнă эс нумай.

Эп сан умна чĕркуçленетĕп,
Ăс-тăнăма йăлт çухатса.
Чĕтрет ӳт-пĕвĕм. Вĕçертетĕп
Тӳммӳсене хыпаланса.

Ак кăкăру тинех шуралчĕ,
Айваннăн, шуххăн, ĕнтрĕкре.
Сив урайне ӳксе çухалчĕ
Çӳхе кĕпӳ — кĕрен тĕтре.

...Сĕтел çинчи çурта та сӳнчĕ.
Сехет пăрахрĕ сас пама.
Пĕр вăрттăн ĕмĕт кĕçĕр тулчĕ.
Çĕн Чун пуçларĕ пурăнма.

*(1985)*

* * *

«Эс — Ромео, эп — Джульетта», —
Теттĕн эс мана.
Ыталаттăн, чуп тăваттăн,
Пăлхатса чуна.

«Эп — Ромео, эс — Джульетта», —
Теттĕм эп сана.
Турăш евĕр эп курattăм
Сан таса сăнна.

Вăхăт вĕçрĕ, вăхăт иртрĕ.
Вăхăт, шӳтлесе,
Ĕмĕт керменне аркатрĕ.
Сӳнчĕç çăлтăрсем.

Çук Ромео. Çук Джульетта.
Тунсăх пур. Тата
Пăр пек сивĕ чăнлăх пур:
ПĔТĔМПЕХ — УЛТАВ.

*(27.08.91)*

* * *

эсĕ тата эпĕ
эпĕ тата эсĕ:
икĕ тăлăх Çутă
икĕ ырату

эсĕ тата эпĕ:
калама çук çывăх
калама çук çывăх
инçерен-инçе

эпĕ тата эсĕ...
çутăсем сӳнеççĕ
тĕттĕмрен те тĕттĕм
Каç танатинче

эпĕ тата эсĕ
эсĕ тата эпĕ:
икĕ халсăр Çутă
икĕ Ӳкĕнӳ

*(17.05.92)*

* * *

Калаймарăм, калаймарăм, калаймарăм эп сана
Никама та нихăçан та каламан сăмахăма.
Сан валли çеç, сан валли çеç эп упранăччĕ ăна —
Ылтăнран та, кĕмĕлрен те хаклăрах пурлăхăма.

Калаймарăм... Каласан та итлес çукчĕ эс ăна —
Никама та нихăçан та каламан сăмахăма.
Эс... сăмахсăрах ăнлантăн. (Сăмах мĕн вăл? Çӳп кăна!).
Эс... ман Шăплăха илтейрĕн. Туйрăн ман Чăнлăхăма.

Калаймарăм, калаймарăм, калаймарăм эп сана
Никама та нихăçан та каламан сăмахăма.
Эс сăмахсăрах ăнлантăн (сăмах мĕн вăл? Çӳп кăна!)
Манăн сивĕ тунсăх тулнă икĕ хăмăр куçăма.

*(31.08.92)*

* * *

Эс мана кăштах та шеллеместĕн.
Эп вара сана усал туман.
Нимĕн те туймастăн эс, сисместĕн.
Сан пекки, каçар та, эп курман.

Эп пит хӳхĕм мар, паллах, пĕлетĕп,
Юмахри мăнаçлă паттăр мар.
Темшĕн-çке мана эс тĕлленетĕн
Каçсерен, хупсассăн куçăма.

Тĕлĕкре кăна сана савмашкăн
Çырнă-тăр Турри мана... Мĕнех...
Пурпĕрех килет ман тав тăвассăм
Эс тĕлленнĕ çут самантсене.

*(14.03.92)*

* * *

Юратасшăнччĕ.
 Юраттармарĕç.
Ĕненесшĕнччĕ.
Ĕнентермерĕç.
Кĕрешесшĕнччĕ.
Кĕрештермерĕç.

Пурăнасшăнччĕ...

*(27.XI.93)*

* * *

Хĕвел
хĕмленĕ-хĕмленĕ те
сӳнĕ

Кун юлĕ

чĕрем
ыратĕ-ыратĕ те
вилĕ

Чун юлĕ

Чунăмпа пĕрле
Юратăвăм юлĕ

Юратăвăм сирĕншĕн
Хĕвел пулĕ

*(1990)*

# ШЫВРАН КӐЛАРНӐ КАРАПСЕМ



* * *

Чун...
Чун...
Чун...

асӑрханӑр: Чун
лӑплансамӑр: Чун
тимлесемӗр: Чун

Чун

Вӑл е пур е çук

Чун

Чуншӑн вӑхӑт çук
Чуншӑн вилӗм çук
çук!

ЧУНШӐН ЧУН ÇЕÇ ПУР

ЧУНШӐН ЧУН ÇЕÇ ПУР

Чун!

*07.12.93*

* * *

Ик енче — ик чăнлăх.
Варринче — чĕре.
Тĕттĕме çĕнсе
Çунакан чĕре.

Ик енче — ик çиçĕм.
Варринче — куççуль.
Вилтăпри çине
Ӳкекен куççуль.

Ик енче — ик пурнăç.
Варринче — асап.
Ĕненме, тӳсме
Хистекен асап.

*16.01.1987*

## КАÇ-КĔВĔ

кĕмĕл кĕсле пек кĕçĕр тӳпе
Турă — кĕслеçĕ

Уйăх çиçет

Уйăх нихçан та илтмен ку Кĕвве
ик çут куççуль
Уйăх пичĕ çинче

*18.10.91*

* * *

Çур.
Çу.
Кĕр.
Хĕл.

Улмуççи çеçке çурать.
Панулми пиçсе çитет.
Панулми çĕре ӳкет.

Çур.
Çу.
Кĕр.
Хĕл.

Хĕрарăм ача çуратать.
Ача, ӳссе, çын пулать.
Çын тупăкра выртать.

Çур.
Çу.
Кĕр.
Хĕл.

*30.09. 91*

* * *

*К. Кириллова*

сивӗ тӑвӑр тӗксӗм пӳлӗм
çутӑ сӳннӗ
çутӑ çук
çутӑ пулнӑ
çутӑ çуннӑ
çутӑ пулнӑ
çутӑ çук

сивӗ тӑвӑр тӗксӗм пӳлӗм
тӗксӗм шӑплӑх
вӑрӑм сак
ӗмӗр килнӗ
ӗмӗр иртнӗ
юлнӑ çӗнӗ шурӑ сак

юлнӑ халсӑр шухӑ ӗмӗт
ӗмӗт пулнӑ
ӗмӗт пур

çутӑ сӳннӗ
ӗмӗр иртнӗ
сивӗ тӑвӑр пӳлӗмре
çутӑ сӳннӗ
ӗмӗр иртнӗ
ӖМӖТ ЧӖРӖ
ШАНЧӐК ÇУК

*1987*

* * *

*Сантăр Пиккла*

Раштав.
Атăл çыранĕ.
Пристань.
Шывран кăларнă карапсем,
Кăшт кăтăш пулнă чарлансем пек,
Пĕр хускалми, ĕнтĕркесе
Лараççĕ тĕксĕм пăр çинче.

Шывран кăларнă карапсем —
Ман шухă, чăрсăр ĕмĕтсем.
Пăрланнă Атăл —
Ман асапăм —
Каварлă, чунсăр самана.

Раштав.
Атăл çыранĕ.
Пристань.
Шывран кăларнă карапсем.

*03. 01. 93*

## ÇУРТ

Тăлăхсен çурчĕ пек туйăнатăн мана
хăш чухне эсĕ, Пурнăç.
Пурте пур ку Çуртра. Пурте пур.
Ăраскал кăна çук.
Тăлăхсен çуртĕнче ăраскалăн хунарĕ
тивсе хĕмленеймĕ.
Çутатаймĕ Каç ĕнтрĕкĕнчи
куçсемпе сăнсене.

Пире çак çаврака Çĕр çине
ăсатаççĕ-тĕр т ĕ р ĕ с л е н м е ш к ĕ н.
Пуртăрах-тăр таçта
Йăлт-Курса-Йăлт-Пĕлсе-Тăракан.
Пĕрисем тăрăшсах, ав,
таçти тамăкри асаппа хăратаççĕ.
Ман шутпа вара, тамăк кунта вăл,
кунта, Çĕр çинче.

Тем тесен те кунтах, Çĕр çинчех,
эс, сĕм тĕттĕм каç пек тĕпсĕр тамăк:
Çын çынна хĕсĕрлет,
Çын татать тепĕр çын пурнăçне.
Кирлĕ мар ултавпа йăпанма —
пурте, пурте эпир ăраскалсăр...
Ма тесен, пĕтĕмпех, пĕтĕмпех
вĕçленет вилĕмпе.

Пире çак çаврака Çĕр çине
ăсатаççĕ-тĕр тĕрĕсленмешкĕн:
Пĕртен-пĕр тĕрĕс çул шырама,
ç ĕ н т е р с е ç ĕ н е л м е.
Юрату, курайманлăх, мăнаçлăх,
ултав, икĕпитлĕх, каварлăх...
Кашниех астарса йыхăрать
çын чунне хăй енне.

Анчах çак тамăках час-часах курăнать
çăтмах пире темшĕн...

Эпĕ ПУР. Ку вара
эпĕ ÇУК пулнинчен лайăхрах.
Чи пахи — ХАЛЬ ПУРРИ. ХАЛЬ ПУРРИ хыççăн
мĕн кĕтнине эп пĕлместĕп.
Çавăнпа ман кунта ытларах
ПУР ПУЛАССĂМ килет.

...Тăлăхсен Çурчĕ пек туйăнатăн мана
хăш чухне эсĕ, Пурнăç.
Пурте пур ку Çуртра. Пурте пур.
Ăраскал кăна çук.
Пурпĕрех эп тулли кăмăлпа
пуç тайса тав тăватăп
Çакă Çурт алăкне
Ман-Валли-Яри-Уçнăскере.

*20.XI.92*

## 1992 ÇУЛХИ ÇУЛЛА «ЧУВАШИЯ» САНАТОРИРЕ «ШУПАШКАР-92» ФЕСТИВАЛЕ ИРТТЕРНИНЕ АСА ИЛНИ

*Ст. Михайлов-Юхтара*

Çав Çу, çав Август, çав каççем,
çав Атăл, çав йăваш хумсем,
çав Ирĕклĕх, çав Кĕреке...
Ăçта вĕсем? Ăçта вĕсем?

Çав Çу, çав Август, çав хырсем,
çав шурă-шурă хурăнсем,
çав ăшçунтармăш пикесем...
Тĕлленчĕç-ши пире вĕсем?

Çав Çăлтăрлăх, çав юрăсем,
туссен сăваплă сăнĕсем,
Тăванлăх, Çынлăх, Чĕрĕлӳ...

Йăлтах — çав Çу.
Йăлтах — çав Август.
Йăлтах — çак тунсăх, çав кĕтрет...

*01.09.92*

# ПУРНАТПӐР-ХА!

*Экспромт*

Кичемлӗхрен — кичемлӗхе.
Пӗчченлӗхрен — пӗчченлӗхе.
Ӗмӗр иртет те Кун юлать.
Мӗн пур пекки — йӑлт  х а л л ӗ х е.

Тӗрӗслӗхрен — тӗрӗслӗхе.
Суялӑхран — суялӑха.
Чун ыратать.
Чун ыратать!..
Хӑямата!
ПУРНАТПӐР-ХА!

*14.07.92*

## ХУРЛĂХЛĂ СĂВĂ

Юр пĕрчи çине юр пĕрчи ӳкет.
Чӳрече хыççăн чӳрече сӳнет.
Ырă каç пултăр, ыйхă пуснисем!
Вăй-хăват пухăр, халран кайнисем!

Çак асамлăха курас çук эсир.
Юр пĕрчи пулса вĕçес çук эсир...
Вăрансамăрччĕ, тимлесемĕрччĕ:
Юр пĕрчи юрлать. Ёненсемĕрччĕ!

...Юр пĕрчи çине юр пĕрчи ӳкет.
Чӳрече хыççăн чӳрече сӳнет...
Никама та халь кирлĕ мар Илем.
Тек ан çун, Хунар. Усси çук. Сӳнсем!..

*25.XI.92.*

## ХУНАР

*М. Андронова*

Тивертсен — тиветĕп.
Сӳнтерсен — сӳнеп.
Эп йӑлтах куратӑп.
Эп йӑлтах пĕлеп.

Хĕвел мар, паллах, эп.
Эп — хунар кӑна.
Сӳнтерсен — сӳнетĕп.
Ҫунтарсан — ҫунап.

Ҫӑлтӑрсем ҫиҫеҫҫĕ.
Ҫиҫчĕр. Ҫиҫчĕрех.
Эп — хунар. Такамшӑн
Эп, тен, кирлĕрех.

Инҫетри и н ҫ е вӑл.
Ҫывӑх — ҫ ы в ӑ х р и.
Тĕнчине п ĕ л м е с ĕ р
Туманах Турри.

Тĕттĕм пур. Пур Ҫутӑ.
Пурнӑҫ пур. Мана
Ҫутатмашкӑн х у ш н ӑ,
Пурнӑҫӑм, сана.

Сӳнтерсен — сӳнетĕп.
Тивертсен — тивеп.
Ҫӑлтӑрсем сӳнеҫҫĕ...
Эпĕ — хĕмленеп.

*01.12.93*

* * *

çуратса янă та
пурнатпăр
туртатпăр
Пурăнăç лавне

туртатпăр
Пурăнăç лавне
çуратса янă та...
п и р т е н  ыйтмасăр
к а н а ш л а м а с ă р
пирĕнпе

*27.XI.93*

* * *

Пĕччен хĕрарăм.
Кивĕ пӳрт.
Тулта çилсем улаççĕ.
Пĕччен хĕрарăм.
Кивĕ пӳрт.
Хĕл.
Шартлама.
Шăпа.

*13.12.93*

* * *

Ансат ман сăввăм.
Хам пекех.
Ман сăввăмра çук икĕпитлĕх.
Ман сăввăмра çук курайманлăх.
Ман сăввăмра пур Ырату.
Ман сăввăмра пур Ĕненӳ.
Ман сăввăмра пур Юрату.

Ансат ман сăввăм.
Хам пекех.

*01.09.92*

## ВАЛЕРИ ТУРКАЙ ВАЛЕРИ ТУРКАЯ ХАЛАЛЛАНӐ СӐВӐ

Эс пуриншӗн те явапла.
Ҫавӑнпах-и, тен,
Пушхирти хӗвел пек, эсӗ
Яланах пӗччен.

Эс пуриншӗн те явапла.
Хӗл иртет те ҫу
Йӑл илет. Анчах та саншӑн
Пурпӗр канӑҫ ҫук.

Эс пуриншӗн те явапла.
Ку санран килмест.
Хӑв эс сӳнтерес тесен те,
Сан чӗрӳ сӳнмест.

Эс пуриншӗн те явапла.
Ирхи шуҫӑм пек
Ир, ытла та ир эс килнӗ
Ҫут ӗмӗтӳпе.

Ҫавӑнпа сана курмаҫҫӗ
Ыйхӑ пуснисем.
Эс в ӗ с е м ш ӗ н те явапла.
Вӑйсӑр кӑвайтсем

Тепӗр хут хӗмленччӗр тетӗн —
Ан шелле вутна.
Ҫынсене ҫутта чӗнетӗн —
Чӗрӳпе чунна

Ҫунтарсам ним шеллемесӗр
Сивӗ ӗнтрӗкре.
Ҫ а в ӑ н п а эс — сӑвӑҫ. Саншӑн
Ҫул ялан пӗрре.

*24.09.91*

# ПĔРНЕ — ÇАВ ТЕРИ ТИМЛĔ ТЕ АСĂРХАНУЛЛĂСКЕРЕ

Эп - - ёнер те.
Эп — паян та.
Эп — ыран та.
Эп — ялан.
Эс вара мана, мăнтарăн,
С е х е т с е м çинчен калан.

Саншăн Вăхăт — ăшăх кӳлĕ.
Маншăн Вăхăт — Океан!
Ăшăх кӳлĕре ишмешкĕн
Эп, каçар та, çуралман.

Эп — ёнер те.
Эп — паян та.
Эп — ыран та.
Эп — ялан.
ПУРĂНСАН — ЯЛАНЛĂХ ПУРĂН!
Ак вăл Тĕп Тĕллевĕм ман!

*03.01.94*

## ЧАП

Паллă çын пулмашкăн йывăр.
Паллă мар пулма — пушшех.
Шарт та пат татса калас-тăк:
Чап пурне те килĕшет.

Анчах чап вăл, кутăн ут пек,
Кашнинех «утлантармасть».
Ай, кăра-çке, мурилесшĕ —
Йăпатсан та йăпанмасть.

Утлансассăн та, çавах вăл —
«Тулхăрать», «чĕвен тăрать».
Тимлĕхне кăшт çеç çухатрăн —
Çĕрелле вăркăнтарать.

Паллă маррисем çакна çеç
Кĕтнĕ тейĕн — мĕскĕнрен
Каçăхса кайса кулаççĕ...
Тахçан пит кĕвĕçнĕрен.

Паллă çын пулмашкăн йывăр.
Паллă мар пулма — пушшех.
Шарт та пат татса калас-тăк:
Чап пурне те килĕшет.

*01.09.92*

* * *

*Мустаев Олега*

Сывă пултăр çителĕклĕх туйăмĕ —
Вăхăтра чарăнмашкăн пĕлни!

Пурăнатпăр пĕрре çеç, тăванăм.
Пурте кирлĕ пурнан пурнăçра.

Сывă пултăр çителĕклĕх туйăмĕ —
Вăхăтра чарăнмашкăн пĕлни!

Нумая хапсăнатăн эс — хапсăн.
Сахалпа çырлахатăн — çырлах.

Сывă пултăр çителĕклĕх туйăмĕ —
Вăхăтра чарăнмашкăн пĕлни!

Ах, ытла та каварлă-çке пурнăç!
Ах, ытла та нумай илĕртӳ!..

Сывă пултăр çителĕклĕх туйăмĕ —
Вăхăтра чарăнмашкăн пĕлни!

Эс утасшăн канма чарăнмасăр,
Эс курасшăн йăлтах тутанса.

Сывă пултăр çителĕклĕх туйăмĕ —
Вăхăтра чарăнмашкăн пĕлни!

Пĕрре çеç пурăнатпăр, тăванăм.
Пурте кирлĕ пурнан пурнăçра.

Сывă пултăр çителĕклĕх туйăмĕ —
Вăхăтра чарăнмашкăн пĕлни!

*13.01.93*

# МАН КИЛЙЫШ

Тăваттăн — тăвăр читлĕхре.
Тăват Тĕнче — пĕр пӳлĕм.
Ирттеркелетпĕр ĕмĕре.
Тата мĕн кĕтĕ ӳлĕм?

Тăваттăн — паллăмарлăхра:
Те пурнăç ку, те тамăк?
Тăватă Чун — тăвăрлăхра.
Тата... тăватă Шанчăк.

*1992, сентябрь*

# ХУЛА-КАÇ-ЭПĔ

Васкать троллейбус тĕксĕм урампа.
Сасси çӳçентерет чуна.
Мĕнпур тĕнче çине лач сурнăн,
Сар çутă сапалать хунар.

Пĕр чун та çук сăмах хушмашкăн.
А-у! Аçта эсир, çынсем?!
Эп сирĕнсĕр пурăнаймастăп!..
Кичем мана, кичем, кичем.

Троллейбус, пĕр самантлăха çеç,
Тархасшăн, чарăн ман ума.
Мана никамсăр хăвармалăх
Пĕр усал ĕç те эп туман.

...Троллейбус чарăнмарĕ маншăн.
Такам-ха эпĕ? Тем шутпа,
Пуçа усса, пĕччен утатăп
Пуш-пушă тĕксĕм урампа.

Эп Туркай мар, эп Турă кĕçĕр —
Кичемлĕхĕн йăваш Турри!..
Çунах, хунар. Пĕлместĕп темшĕн
Чуна йăпатрĕ эс пурри.

*27.09.91*

# ÇĔЛЕН ĂШШИ

Çĕлен Ăшши килсе çитет те,
кичемлĕх авăрне путма пикеннĕ
çут тĕнче
йăвашшăн йăл кулса илет.

Ах, тĕлĕнтермĕш çут тĕнче!
Ах, мыскараçă çутçанталăк!..

Кайран, ан тив, алхастăр сивĕ тунсăх,
чуна çӳçентерсе, улаччăр тăвăлсем.
Ан тив, кайран янратăр у р ă х кĕвĕ...
Паян вара
Тĕнче Оркестрĕн Дирижерĕ —
Çĕлĕн Ăшши.

Шăпланăр.
Тимлĕр:
ку Симфони
çулталăкра
п ĕ р р е çеç
янăрать.

*23.09.91*

* * *

*Ю. Т.*

Паян — чăтма çук йывăр кун.
Хаваслăх тарчĕ йăвинчен.
Тин ăснă шыв пек сивĕ юн
Юхать ман юн тымарĕнче.

Паян — чăтма çук йывăр кун.
Выç кашкăр пек улас килет.
Сив читлĕхри черченкĕ чун,
Çеçке пек, пăр çине ÿкет.

Паян ман таврара пурри
Йăлт — мана хирĕç, ман тăшман:
Шуйттанĕ, Пÿлĕхĕ, Турри...
Ман кĕрешмешкĕн вăй юлман.

Ман кĕрешессĕм те килмест...
Ман çĕнтерессĕм те килмест...
Ман пурăнассăм та килмест...
«Килмест» теессĕм те килмест...

Паян — чăтма çук йывăр кун.

*21.02.93*

# ПАСАР

Пӗтӗмпех сутӑнать!
Пӗтӗмпех илӗнет!
Пӗтӗм пурнӑç — пасар!
Пӗтӗм пурнӑç — камит!

— Укçу пур-и? Пулсан,
Эс те пур çӗр çинче.
Укçу çук-тӑк, тасал!
Саншӑн мар ку тӗнче!..

Пӗтӗмпех сутӑнать!
Пӗтӗмпех илӗнет!
Пӗтӗм пурнӑç — пасар!
Пӗтӗм пурнӑç — камит!

Ак сана — шӑлавар!
Ак сана — мулаххай!
Ак сана — антиквар!
Ай, паха-тӑк паха!..

Пӗтӗмпех сутӑнать.
Пӗтӗмпех илӗнет.
Пӗтӗм пурнӑç — пасар.
Пӗтӗм пурнӑç — камит.

— «Ытла хаклӑ»? Йӳнни —
Пурнӑç çеç ку чухне:
Паян пур, ыран çук.
Çӑмӑллат енчӗкне!..

Пӗтӗм пурнӑç — камит.
Пӗтӗм пурнӑç — пасар.
Пӗтӗм пурнӑç — ултав...
Турӑ, тӳсӗмлӗх пар!

*30.09.91*

* * *

*Г. Александрова*

Эп — хресчен.
Хресчен эп, хаклă çыннăм.
Хулара пурăнакан хресчен.
Асфальтпа бетон тыткăнĕнче эп.
Ир те каç йышра эп,
тăлăхскер.

Эп — хресчен,
Хресчен эп, ырă çыннăм.
Эп туятăп хамăн айăпа:
ачаллах, ав, таркăн пулса тăтăм,
тăлăха хăвартăм ялăма.

Малтанах çутта тухас килетчĕ.
Илĕртетчĕç çутă инçетсем.
Тăван халăхшăн ыр ĕç тума хистетчĕç
чăрсăр та сăваплă ĕмĕтсем.

Ыр ĕçсем те турăм, йăнăшсем те.
Юлташсем те тупрăм, тăшмансем те.
Ял çынни пулма çеç пăрахмарăм.
Савăймарăм чунсăр хулана.

Куç умне тухать те тăван ялăм,
хыттăнрах тапма пуçлать чĕрем.
Турăçăм, мĕн хăтланатăп эпĕ?!
Хăçанччен эп пурăнăп ютра?!

Хăçанччен,
аманнă кайăк евĕр,
асапланăп эп танатара?
Тăван ялăм мансăр
пурăнайрĕ.
Эпĕ унсăр
пурăнатăп-ши?

Эп — хресчен.
Хресчен эп, хаклă çыннăм.
Хулара пурăнакан хресчен.
...Ик çыран. Ик пурнăç.
Леш енне каçасчĕ.
Леш еннех каçасчĕ.
Ишĕлнĕ кĕпер.

*25.07.91*

## ТĂВĂЛ

*Çĕн сывлăш, вĕр!*
*Çĕн сывлăш, вĕр!*

Çеçпĕл.

Ку — ман çанталăк!..
Çил-тăман
асар-писер çавăрттарса,
Антăхтарса,
халран ярса,
Тĕлли-паллисĕр алхасса,
Хăй вăйĕпе киленнĕ чух
Эп хам та
çил-тăман пулса,
Асăрхану çинчен манса,
Тĕнчен хастар пăлхавçи пек
çӳретĕп
тĕксĕм урамра!

Ку — ман çанталăк.
Эп ăна мĕн чухлĕ кĕтнĕ!
Мĕн чухлĕ тилмĕрнĕ ăна
часрах килсе чуна уçма.
Вăл килессе ĕненнĕрен
ман чĕрере сӳнмен хĕлхем.

Ку — ман çанталăк...
Тинĕс пек
тӳпе урса кайса улатăр!
Хум хыççăн хум çапмассерен
ултавăн никĕсĕ аркантăр.
Юрпа хупланччăр палăксем.
Çĕрĕшнисем
ӳксе саланччăр!
Тасалтăр нишлĕх Çĕр çинчен,
Çĕн Кăмăл
Çĕнĕ Кун
çураттăр!

Ку — ман çанталăк!
Аранах
эп уçă сывлăшпа сывлатăп.

Пăхатăп тăвăл куçĕнчен.
Унта эп хам сăна куратăп.

Эй, тăвăл, тăвăл,
вирлĕрех!..
Эс — ман Çанталăк!
Эсĕ — эп!

*1987*

* * *

Тапӑртатса тӑран тур лашине
кӳлес терӗм ирпе, хӗвел тухсан.
Каяс терӗм инҫе-инҫе ҫӗре,
килес терӗм телейӗме тупса.

Анчах... Тур лашийӗ ҫӳрет ҫеҫенхирте.
Хӗвелтухӗҫӗнче — хура пӗлӗт.
Инҫе ҫулӑм кӑна ҫиҫет-ҫиҫет умра.
Инҫе ҫул ҫути ҫеҫ лӑпкать сӑна.

Пуҫне ухса тӑран тур лашине
кӳлес терӗм каҫпа, хӗвел ансан,
Тухас терӗм инҫе-инҫе ҫула,
ҫӳрес терӗм асапӑма манса.

Часах тур лашийӗ килсе тӑчӗ ума.
Тӳпе тулчӗ кӗрен ҫӑлтӑрлӑхпа...
Инҫе ҫулӑм кӑна тек курӑнмасть малта.
Малта мӗскер?.. Ҫӑра тӗтре кӑна.

*1987*

## МИХАИЛ БУЛГАКОВА — ПУҪӐМА ТАЙСА

*— Я к тебе, дух зла и повелитель теней...*
*— Если ты ко мне, то почему ты не поздоровался со мной, бывший сборщик податей?..*
*— Потому что я не хочу, чтобы ты здравствовал...*
*— Но тебе придется примириться с этим... Что бы делало твое добро, если бы не существовало зла, и как бы выглядела земля, если бы с нее исчезли тени?.. Ты глуп.*

М. Булгаков. «Мастер и Маргарита».

Мастер пур.
Пур Маргарита.
Воланд пур.
Пур Т ӗ р ӗ с л е в.
...Нимӗн те ҫынран килмест-ши?
Е йӑлтах ҫынран килет?

Мастер пур.
Пур Маргарита.
ВӐЛ та пур.
ВӐЛ пулмасан,
М ӗ н п у р р и пулаяс ҫукчӗ.
Пулас ҫукччӗ...
Воланд та.

*30.12.93*

* * *

Тек нихçан та çыраймассăн
Туйăнать хăш чух.
«Йăлт каланă. Пурте паллă.
Пурпĕр усси çук», —
Тетĕн те, ларан пĕр хушă
Аллуна усса.

Йăлт каланă. Пурте паллă.
Санăн сăввусем
Кăлăх кун çути курассĕ,
Тем ĕмĕтленсе.

Кама кирлĕ халь Поэзи?
Камшăн тăрăшан?
Сансăрах тулли пуçватмăш.
Эсĕ çеç, айван,

Такама таçта чĕнетĕн,
Тем ĕнентерен,
Тин çуралнăн тĕлĕнетĕн
Çутă тĕнчерен.

Йăлт каланă. Пурте паллă.
Эсĕ — ытлашши.
Сан йышши айванскерсемшĕн
Шел Хĕвел ăшши.

...Тек нихçан та çыраймассăн
Туйăнать хăш чух.
«Йăлт каланă. Пурте паллă.
Тек мехелĕм çук», —
Тетĕн те... каллех килессĕ
Сăвăсем асна.

*18.09.91*

* * *

*Петĕр ЛЬВОВА*

Пĕчченлĕх, пĕчченлĕх, пĕчченлĕх,
тархасшăн, хăпсам ман çумран.
Ниçта та манран эс юлмастăн.
Йĕкреш-и эс ман, е элчел?

Пĕчченлĕх, пĕчченлĕх, пĕчченлĕх...
Ну, мĕн тинкеретĕн куçран?
Е эс те, мăнтарăн, пĕччен-и?
Е сан та чуну ыратать-и?
Е эс те пуриншĕн те ют-и?..

Ан макăр, тăванăм, ан найкăш.
Усси пулас çук пурпĕрех.
Атя, пĕр-пĕрне шеллесе
(пире шеллес çук тек никам та),
атя, пĕр-пĕрне каçарса
(пире тек каçармĕ никам та),
çĕклер-ха тулли алтăра!

Эп саншăн ĕçетĕп, Пĕчченлĕх!
Эс пур чухне эп пĕччен мар.

*1989*

* * *

Ёмĕр пурăн — ĕмĕр тĕлĕн!
Ёмĕр Çул шыра.
Мăчавар, пуçла çĕн Кĕлĕ.
Пуç çапар Турра.

Мăчавар, кала-ха — мĕншĕн
Ман чĕре çунать?
Эсĕ тивĕç й ă л т пĕлмешкĕн.
Ларт мана çумна.

Каласам — Усал е Ырă —
Хăшĕ вăйлăрах?
Тата м ĕ н е к а м вăл, Турă?
Мĕн-ши вăл, Сăмах?

«Çамрăк шăллăм, ырă йĕкĕт, —
Тет мучи тинех, —
Хуравне манран эс ан кĕт.
Эп те сан пекех.

Ир те каç пуçа вататăп
Çак ыйтусемпех.
Эп те хам Çула шыратăп,
Çулçӳревçĕ пек.

Эп ç а к н а çеç тĕшмĕртетĕп:
ÇАКĂ ÇĔР ÇИНЧЕ
ÇЫН ЙĂЛТАХ-ЙĂЛТАХ ПĔЛЕС-ТĔК,
АРКАНАТЬ ТĔНЧЕ».

Ёмĕр пурăн — ĕмĕр тĕлĕн!
Ёмĕр Çул шыра.
ПĔТĔМПЕХ к а й р а н эс пĕлĕн.
ПĔТĔМПЕХ — к а й р а н...»

*(02.09.91)*

* * *

Эп чи малти мар.
Эп чи кайри мар.
Эп ăмсанмастăп
чи малтине.
Чи кайрине çеç эп темшĕн шеллетĕп...
Темшĕн шеллетĕп эп чи кайрине?..

Эп чи хитри мар,
Чи тискерри мар.
Эп ăмсанмастăп
чи хитрине.
Тискеррине çеç эп темшĕн шеллетĕп...
Темшĕн шеллетĕп эп тискеррине?..

Эп чи ăсли мар,
Чи ухмаххи мар.
Эп ăмсанмастăп
чи ăслине.
Ухмаххине çеç эп темшĕн шеллетĕп...
Темшĕн шеллетĕп эп ухмаххине?..

Эп чи вăйли мар,
Чи халсăрри мар.
Эп ăмсанмастăп
чи вăйлине.
Халсăррине çеç эп темшĕн шеллетĕп...
Темшĕн шеллетĕп эп халсăррине?..

*30.01.93*

# ПУРНĂÇ. ÇУЛТАЛĂКРИ ПĔР КУН

*(1993 çулхи февралĕн 6-мĕшĕ)*

эпир
паян
пытартăмăр
виле

çынсем
паян
тăваççĕ
туй

## А

а

а-а

а-а-а-а-а-а

акă аранах каларăм: а
акă — а — сасартăк янăранă вăйсăр сасă
акă — а —
са-ма-на
акă — а —
к у н т а ы р а т у к ă н а
к у н т а ă с а т у к ă н а

акă — а — çĕнĕ çын — таса а
акă — а — асап
асап
асап

а

а-а

а-а-а-а-а-а

1989

## АРСЕНИЙ ТАРАСОВА

Тăхта, Арçук,
эп музыка яратăп.
Атя пĕр хушă калаçмастпăр.
Эпир санпа нумай калаçнă.
Нумай тавлашнă, ĕмĕтленнĕ.
Чĕресене нумай çунтарнă...
Усси те пулчĕ кăшт, те çук?

Ан тив, Арçук,
халь Музыка калаçтăр.
Калас тени ун ытларах-тăр.
Пиртен вăл ытларах çунать-тăр —
çапах
санпа ман пек
вăл пĕртте салху мар.

Пĕлетĕн-и, Арçук,
мĕн-ма вăл янăрать мăнаçлăн?..

Вăл я л а н а х пулать.

Эпир санпа...

Атя, Арçук,
тимлер Свиридова.

1989

# 1993 ÇУЛТА ВĂТАМ ШКУЛТАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ПАЛЛАМАН ЧĂВАШ АЧИНЕ

*ПРАСКИ ВИТТИНЕ халаллатăп.*

В. Т.

Ман пекех чăваш ачи эс.
Ман пекех «йăваш».
Тен, «тымарсене» тĕпчес-тĕк,
Эс — ман хурăнташ.

Елчĕкрен-и, Муркашран-и,
Тен, Çĕмĕрлерен?..
Пурпĕр мар-и, пĕр тесессĕн,
Эс — ЧĂВАШ ЕНРЕН!

Эс халь, çамрăк кăйкăр евĕр,
Вăйлă та кăра.
Вĕçессӳ килет пулсассăн,
Шăллăм, а н х ă р а!

Мĕн вăл, Пурнăç? Пурнăç — Вăрçă.
П у р ă н а с тесен,
Кашни кун тивет пулмашкăн
Вăрçă хирĕнче.

Леш енче — Усал эшкерĕ.
Ырă — ку енче.
Варринче тăратăн эсĕ...
Турă умĕнче.

Ман пекех чăваш ачи эс.
Çамрăкрах кăна.
...Еплерех эп, «ватă кашкăр»,
Ăмсанап сана!

*03.09.93*

## «ШУПАШКАР — ЕЛЧĔК» АВТОБУСРА ПАЛЛАШНĂ ЮЛЯ А. ШТУКАТУР-МАЛЯРА

Штукатурăм Юля,
ăшă куçлăскер,
Аллуна кăштах та
упрамастăн эс.
«Ацетон та цемент...
Ĕçĕм çавнашкал...»
Ĕç вăл — ĕç, тăванăм.
Пурнăç — ĕç çеç мар!

Пуçăма таятăп
эп сан умăнта.
Чуп тума эп хатĕр
сан аллусене...
Штукатурăм Юля,
тархаслап сана:
Ĕçлеме ĕçле те...
П у р ă н м а ан ман!

*11.09.93*

## ХĔВЕЛÇАВРĂНĂШ: ШĂПА

эп
ялан
Хĕвел
енне
пăхатăп

Хĕвел пур чухне
паллах

çĕрле...
эп
Хĕвел
тухассине
кĕтетĕп

вăл
пĕрех
тухассине
пĕлсе

11.09.93

## ДЕЛИ

Кивĕ Дели. Çĕнĕ Дели.
Сари те тюрбан.
Пĕрин — пур, теприн çук килĕ.
Пурнăç! Мĕн тăван...

Пĕрисем «Фордпа» çӳреççĕ.
Теприсем — çурран.
Пурте темĕскер кĕтеççĕ.
Пурнăç! Мĕн тăван...

Пĕрисемшĕн Будда — Турă.
Теприне аван
Аллаха сăвап тусассăн.
Пурнăç! Мĕн тăван...

Кивĕ Дели. Çĕнĕ Дели.
Сари те тюрбан.
Йăлт пĕрле: асап, телейлĕх...
Пурнăç! Мĕн тăван...

13.01.93

* * *

Мадрасра чăтма çук пăчă.
Пиçĕхсе çитсен,
Шухăшлатăн: «Турă тӳсĕм
Патăрччĕ!» — тесе.

Чăвашра мунча хутмашкăн
Вут касма тивет.
Индире ансат: хĕвел хăй —
Вутсăрах — хĕртет.

Салтăнса пăрах та çапăн!
(Милĕкӳ пулсан).
...Мадрасра мунча кĕмешкĕн
Çав тери ансат.

14.01.93

# ЭП ЭКВАТОР ПАТНЕ
# КĂШТ АНЧАХ ÇИТЕЙМЕРĔМ

*Ал тăссан, çитес пекехчĕ Перси...*
П. Хусанкай

Эп экватор патне кăшт анчах, кăшт анчах çитеймерĕм.
Питĕ çутă иккен кăнтăр çăлтăрĕсем!
Лапсăркка пальмăсен айĕнче чылайччен эп çӳрерĕм,
Хам тĕнче хĕррине çитнинчен тĕлĕнсе.

Ав епле иккен эс, ĕмĕтри илĕртӳçĕ-инçетĕм!
Питĕм тăрăх хуллен юхса анчĕ куççуль.
Эп экватор патне кăшт анчах, кăшт анчах çитеймерĕм...
Алла тăснă пулсан, тен, çитеттĕмччĕ пуль.

*15.01.93*

* * *

Джайпурта эп ярӑнтӑм слонпа.
Слонӗ ватӑ. Йывӑррӑн утать.
Шеллемест хуҫи мӑнтарӑна —
Пуҫӗнчен мӑлатукпа ҫапать.

Ултҫӗр утӑм. Пурте — тӑвалла.
Янавар яран-аран сывлать.
«Мӗншӗн лартӑм, — тетӗп, — иҫмасса,
Мӗншӗн тухрӑм ҫак инҫе ҫула?»

Курманнин курас килет, курнин...
Урлӑ-пирлӗ шутласан, паллах,
Индуса та ӑнланма пулать:
Май пур чух укҫа ун тумалла.

Слонӗ те ялан апат ыйтать.
Ҫемйине те тӑрантма тивет...
Ӑнланатӑп эпӗ индуса.
Индуса та ман шеллес килет.

Ултҫӗр утӑм — ултҫӗр ҫухрӑм пек.
Талпӑнатпӑр малалла ҫапах.
Тӗрлӗ шухӑшпа пуҫа ватса,
Джайпурта эп ярӑнтӑм слонпа.

*19.01.93*

# ЮГОСЛАВИ. НОСТАЛЬГИ

Ăшă тинĕс хĕрринче, çӳллĕ ту çинче
Тăван ялăн йăмрисем аса килчĕç те,
Эп тинкертĕм инçете куç ывăниччен,
Ту та, тинĕс те умран йăлт çухаличчен.

Акă тухрĕ куç умне кивĕ укăлча,
Шухă ут утланнăран çиçекен ача.
Ав текерлĕк çаранта хурланса йĕрет.
Ĕсĕклевĕ чĕрене сăнă пек тирет.

Ав Васлей тете утать такăр сукмакпа,
Пул тытма ĕмĕтленсе çĕнĕ атмапа.
Ав Кĕтне леш айккине сар хĕвел анать,
Авалхи хыр тăррине ларайса канать.

Эп кăна, эп çеç ютра, тăлăх-турат пек,
Çунтаратăп чунăма тунсăх вучĕпе.
Хăвран ху тарма мехел тупма çук иккен,
Пӳрмен канлĕх ырлăхне курма çук иккен.

Ăшă тинĕс хĕрринче, çӳллĕ ту çинче
Тĕлĕнтермĕш çăтмах пек туйăнать тĕнче.
Ман вара инçе-инçе, аякри килех,
Пĕчĕк çеç чăваш ялнех, таврăнас килет.

*1986*

## ТАДЖ-МАХАЛ

Инди.
Агра.
Тадж-Махал.
Кĕтретсен Кĕтречĕ.
Кĕтнĕ. Шаннă.
Кун пекех тĕлĕнеп теменччĕ.

Инди.
Агра.
Тадж-Махал.
«Ах!» та «ах!» теетпĕр,
«Ку Çурта хăй аллипе
Турă тунă!» — тетпĕр.

Инди.
Агра.
Тадж-Махал.
Кĕлчечек пек мрамор.
ТĔЛĔНЕС килет пулсан,
Аграна кайсамăр!

*13.01.93*

## МЕТРО

Мускав.
Метро.
Çын юхăмĕ.
Васкав. Васкав. Васкав.
Сив куçсенче пĕр ĕмĕт çеç:
Часрах! Часрах! Часрах!

Пин тĕрлĕ тум та сăнсăрлăх.
Катанпир пек питсем.
Кунта ыр кăмăл — вăйсăрлăх.
Тăраймăн — пĕр ӳксен.

Курмаççĕ те, илтмеççĕ те.
Васкаççĕ çеç таçта...
Вĕсем темрен тараççĕ, тен?
Тен, çăлăнăç — малта?

Мускав.
Метро.
Çын юхăмĕ.
Кермен-тупăксене
Тулаççĕ сивĕ çăлтăрсем —
Тĕрткелешсе сӳнме.

*1987*

* * *

*Юрий Алексеевич ТАРАСОВА*

Мĕнех, тăванăм, тыт «тилхепӳне»!
«Урхамаху» Çил çунатпа вăй виçтĕр.
Çул-йĕр тени савать Кун Çутине.
Çĕрле, ан тив, усал-тĕсел çӳретĕр.

Эпир санпа, тăванăм, тĕнчене
Килмен çынна сăлтавсăр хур тумашкăн.
Ай, çăмăл мар, тăванăм, чунсене
В а р а л а н м а п а м а с ă р усрамашкăн.

Эпир санпа çак тĕнчене килмен
Мĕн пуррипе çеç çырлахса лармашкăн.
Кайран ан тивтĕр, тетпĕр, ӳкĕнме
Яш чух хастар та шухă пулайманшăн.

Атя, тăванăм, тыт «тилхепӳне»,
«Урхамаху» çĕре лекмесĕр вĕçтĕр.
Çитетпĕрех эпир Тĕнче Хĕрне!
Эпир те çитмесен, тата кам çиттĕр!..

*17.05.93*

## МУЛ

Пуян
чух
пуриншĕн те
пуян
эс.

Чухăн
чух
эс
чухăн
хăвшăн
çеç.

*31.08.93*

## ПУРНĂÇ

Пурте пур.
Телей çеç çуккă.

Çавнашкал вăл —
Пурнăç —
Штуккă.

*август, 1993*

* * *

Темĕскер çитмест.
Темшĕн ăш вăркать.
Ман умра
хура
Ĕмĕлке тăрать.

Эп — сылтăмалла.
Вăл — сылтăмалла...
Эпĕ — каялла.
Вăл та — каялла...

Темĕскер çитмест.
Темшĕн ăш вăркать.
Ĕненни, тӳсни
К ă л ă х туйăнать.

*03.01.94*

## ЙĂПАНĂВĂМ

Эп тинĕс пек мăнаçлă!
Эп тăвăл пек кăра!
Пуласлăхăм ман аслă!
Ытти-хытти — тарам!

Пĕлетĕп: пĕрисемшĕн
Эп — вĕçкĕн те пуçтах.
Эп г е н и й теприсемшĕн.
Эп... хирĕç мар пачах!

Хаклакансем х а к л а ч ч ă р.
Вĕсем нумай ку чух.
МАН ĔÇĔМЕ ÇЕÇ МАНСĂР
НИКАМ ТА ТĂВАС ÇУК!

Эп тинĕс пек мăнаçлă!
Эп тăвăл пек кăра!
Пуласлăхăм ман аслă!
Ытти-хытти — тарам!

*06.05.93*

## ХАЛЬХИ ÇĔРМЕ ПУЯНСЕНЧЕН ПĔРНЕ — ЧĂТМА ÇУК ЮРАТСА

Укçа купи çинче ларатăн,
Кашни пусушăн чĕтресе.
Хăвна хăш чух йăпаткалатăн
«Тĕнче хуçи эп халь!» — тесе.

Тĕнче хуçи эс. Тавлашмастăп.
Санран вăйли никам та çук.
Ку... ш ÿ т анчах. Чунран калас-тăк:
Укçа чури эс, ăçтиçук!

*04.08.93*

* * *

Кăлăхах ăмсанатăн мана эс, тăванăм.
Кăлăхах çунтаратăн черчен чĕрўне.
Манăн — хамăн кунçул, санăн — хăвăн. Сăлтавсăр
Кирлĕ мар-тăр хумашкăн ура пĕр-пĕрне.

Кăлăхах ăмсанатăн мана эс, тăванăм.
Пурнăçра телейпе хĕн-асап юнашар.
Паян мар-тăк, ыран ăмсанмашкăн, тен, тивĕ
Манăн сан телейне... Ыран эп курăп шар.

Кăлăхах ăмсанатăн мана эс, тăванăм.
Эп сана нихăçан та усал сунас çук.
...Эпир пурте телейлĕ — телейлĕ чухне çеç.
Эпир пурте телейсĕр — телей сўннĕ чух.

*23.06.93*

## КИЛСЁР ЙЫТĂ

Килсĕр йытă эпĕ кĕçĕр.

Кам мана кĕтет?
Никам та.
Кам мана савать?
Никам та.
Кам шеллет мана?
Никам та.

Шеллеме те кирлĕ мар.

Мĕн тери эп ирĕклĕ!..

Кама кирлĕ ирĕклĕх?
Йӳнĕпех сутатăп!..
Ну, пуçтарăнăр килсемĕр!..

Çук пĕр сас та.
К и л л и с е м
Канлĕ çывăраççĕ.

Эпĕ ирĕклĕ!
Чăтма çук
эпĕ ирĕклĕ!

Мана
кĕтекен
çук.
Мана
савакан
çук.
Мана
шеллекен
çук.

Килсĕр йытă кĕçĕр эпĕ.
Ирĕклĕх чури.

*02.07.93*

* * *

хăш чух никама та курассăм килмест
эп хам та илемсĕр пек çутă тĕнче те
хăш чух никама та курассăм килмест
хăш чух никама та итлессĕм килмест
тăшман те суять пек çывăх юлташ та
хăш чух никама та итлессĕм килмест
хăш чух ман пачах та пурăнассăм килмест
чи пысăк телей пек ун чух маншăн вилĕм
хăш чух ман пачах та пурăнассăм килмест

*01.07.93*

## ĔМĔЛКЕСЕМ

хĕвел
тухни те
кăлăхах

вĕсемшĕн
кун та
çĕр те
çук

вĕсен —
хăйсен
сукмакĕсем

вĕсен —
хăйсен
тапăрĕсем

ĕмĕлкесемшĕн
пурте пĕр:
кун — çĕр
çĕр — кун

*1988*

## ÇУРТА

*Павел Егорова асăнса*

эп сана ÿпкелеместĕп...

тин çеç çунма пуçланăччĕ
çурта
каç сĕмлĕхне сирме пуçланăччĕ
сасартăк
сÿнчĕ
лап

эп нимрен те тĕлĕнместĕп
эп те сан пекех —
çурта
тен элчел çитмесĕр сÿнĕп...

питĕ тĕттĕм-çке тулта!

1987

# ЧĂРĂШ

Пăр-тĕрĕ-кантăклă кермен умĕнче
çамрăк чăрăш выртать, ешĕл чăрăш,
хуçăлса, аманса пĕтнĕскер.
Тĕксĕм симĕсскере
çил лăскать, çил силлет —
хăвăртрах сăрт айне пытарасшăн.

Уяв иртнĕ иккен. Уяв иртнĕ,
пĕрешкел кунсемпе улшăнса.
Уяв иртнĕ иккен. Уяв иртнĕ.
Çамрăк чăрăш вырать йĕп тăкса.

*1984*

# ВĂХĂТ + ЛĂХ

вăхăтлăх йывăрлăх
вăхăтлăх çăмăллăх

савăнăç — вăхăтлăх
хурлăх та — вăхăтлăх

вăхăт + лă Вăхăт + лăх

Пурнăç та — вăхăтлăх
Вилĕм те — вăхăтлăх

Вилĕм те — Вăхăтлăх!..
вăхăт + лăх!..
Вăхăт + лăх!

*27.12.93*

* * *

Çунтарса ярасччĕ,
туйăмăм, сана.
Анчах эс нихçан та
пĕтес çук çунса.

Вĕçтерсе ярасччĕ,
хурлăхăм, сана.
Анчах эс вĕçместĕн,
çунатту çук сан.

Читлĕхе хупасччĕ,
ĕмĕтĕм, сана.
Анчах эс ахаль те
читлĕхре ялан.

*1989*

* * *

эпир
чӗмсӗр

пире чӗмсӗр тунӑ

эпир сас памастпӑр
(Сӑмахӑмӑр вилнӗ)
туятпӑр кӑна

тата
чӗрене ҫунтаратпӑр

тата
ним юлми ҫухалатпӑр

ҫунатсӑр
Хӗвелсӗр
Сӑмахсӑр

*1988*

## ЧИТЛĔХ

Упăтесем читлĕхре-и?
Читлĕхре.
Попугайсем читлĕхре-и?
Читлĕхре.
Арăслансем читлĕхре-и?
Читлĕхре.
Сарă кайăк?..
Сарă кайăк
яланах
ирĕкре.

*1989*

## ЭЛЕГИ

Пушаннӑ пӳлӗмре пӗччен ларатӑп,
Кичеммӗн тинкерсе чӳречерен.
Пурин ҫинчен те харӑс шухӑшлатӑп,
Тек шухӑш пулмӗ, тейӗн, ӳлӗмрен.

Ах, ҫак самант... Ҫак кӑткӑслӑх, ансатлӑх...
Ҫӗр пин ыйту. Хуравӗ тупӑнмасть.
Вӑй-халӑм ҫук кулмалӑх, макӑрмалӑх.
Вӑй-хал пулассӑн та тек туйӑнмасть.

Ик куҫ тулли — кӗрен ката ялтравӗ,
Ҫур хӗвеле хупланӑ вӗрене.
Вӗҫет хуркайӑк. Мӑшӑр ҫунат шавӗ
Илтӗнес пек тимлетӗп тӳпене.

Ҫулне пӗли-пӗлми вӗҫмест хуркайӑк.
Ик чӑнлӑх тупрӑм ун вӗҫевӗнче —
*Пӗрре пӑхма* тӳпе ҫавра та тайлӑк,
*Пӗрре пӑхма* кӑна ансат тӗнче.

...Пушаннӑ пӳлӗмре пӗччен ларатӑп.
Чӳречере — сенкер-хура ката.

*1982*

* * *

Илеп те ак шăпăр,
пуçлатăп шăлма
Хула урамне —
васкамасăр, мăнаçлăн.
Мĕне мана бизнес!..
Мĕне мана мул!..
Эп, ирĕклĕскер,
ИРĔКРЕ пурăнасшăн.

Политика, влаç,
кĕрешӳ, çапăçу...
Эпир, çăлтăрсем пек,
тиветпĕр, сӳнетпĕр...
Ун пек-и, кун пек-и —
у р а м т а с а м а р.
Апла-тăк, пĕри
урама тирпейлетĕр.

Илеп те ак шăпăр,
пулса çав п ĕ р и,
Шăлатăп хула урамне
каçăн-ирĕн.
Ман нимĕн те пулмĕ,
ман пулĕ йăлтах:
ТĔНЧЕ МУЛĔПЕ
ТУЯНМА МАЙ ÇУК ИРĔК!

*13.07.93*

* * *

Пин тĕрлĕ шухăш ĕшнинче
эп хамăн шухăша усратăп.
Сив çил улать-и, тăм ÿкет-и —
шухăшăма шанма памастăп.

Пин тĕрлĕ кăмăл хирĕнче
эп хамăн кăмăла усратăп.
Ăрша вылять-и, çĕр типет-и —
кăмăла хăрма памастăп.

Пин тĕрлĕ ĕмĕт шевлинче
эп хамăн ĕмĕте усратăп.
Тĕттĕмленет-и, çуталать-и —
ĕмĕтĕме сÿнме памастăп.

Пин тĕрлĕ пурнăç пахчинче
эп хамăн пурнăçа усратăп.
Ирпе Хĕвел тухмассерен
эп çĕнĕ Куншăн савăнатăп.

*1982*

## УНКĂ

хĕлхем

хĕлхем ăшĕнче —
телей

çĕлен

хĕлхем тавра —
çĕлен
хура çĕлен

кăлăхах
тĕллентетĕн
телей:

хĕлхем
хĕлхем ăшĕнче
телей
хĕлхем тавра
çĕлен
хура çĕлен

у
ă н
к

*1989*

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Каллех
тепĕр çул
çиçсе ӳкрĕ
Иртнин
уй-хирне,
çăлтăр пек...

Юман вуллинче
çĕнĕ ункă
хĕссе
çупăрлать
киввине.

*1987*

* * *

*Г. Фомирякова*

янкăр кăвак тӳпере хěвел хěртет

чăпар чăх çатмари лěкки ларнă шыва
сыпкăм-сыпкăм ěçет

чăх мěлки
тěксěмскер
çатмана перěнет

чăх мěлки еннелле шыв тумламě вěçет

кěтесре
йăвинче
йыт çурийě выртать
умěнчи кив шăмма чěрнипе чăрмалать

йыт çури хушăран мăйěнчи сăнчăрне
пěчěк çеç чěлхипе
çулласа илкелет

йыт çури
чăх мěлки еннелле вěçекен тумлама
куç илмесěр сăнать

*1982, 1993*

* * *

*С. Асамата*

Ăçта эс, манăн тунсăхлă кĕслем?
Сана тахçантанпах алла илмен эп.
Ĕсĕклесем, чĕрем, ĕсĕклесем...
Куççулĕм, юх; эп саншăн именместĕп.

Çак чунсăр, тĕксĕм, сулхăн тĕнчере
Никам тą никама та шеллемест-мĕн.
...Шеллеттерес килет-çке пурпĕрех,
Шеллеттерес килет хăйне этемĕн.

Эп этем мар-им? Ман чĕре, ман чун
Суранлансан та ыратмасть, теетрим?..
Эсир хавасла эп хурланнă чух.
Е хăвăр хурланассăр çук, теетрим?

Ăçта эс, манăн тунсăхлă кĕслем?
Сана тахçантанпах алла илмен эп.
Ĕсĕклесем, чĕрем, ĕсĕклесем...
Куççулĕм, юх; эп саншăн именместĕп.

*16.08.93*

* * *

хурлăхлă-хурлăхлă-хурлăхлă
куç
хуп-хура тутăр
кăн-кăвак çӳç
...унăн суранĕ тӳрленес çук
вăл тек нихçан та йăл кулас çук

хурлăхлă-хурлăхлă-хурлăхлă
куç
хуп-хура тутăр
кăн-кăвак çӳç
...ывăлăм ывăлăм ывăлăм тăр!..
ывăлăм ывăлăм
уç куçна уç!..

хурлăхлă-хурлăхлă-хурлăхлă куç
хуп-хура тутăр
кăн-кăвак çӳç

*26.04.92*

* * *

эпир
кунта
канма
килмен

пире
кунта
ăсатнă
т ĕ л ĕ н м е
тата
т ĕ р ĕ с л е н м е

канма килмен эпир кунта

анчах
эпир
куратпăрах
канса

канса куратпăрах

*1991 ç., август*

* * *

калама юраман сӑмахсем —
ҫуратма юраман ачасем
. . . . . . . . . . . . .
калама юраман сӑмахсем —
п у р п у л с а
курайман
Т у р ӑ с е м

*1989, 1993*

* * *

*П. Диомидова*

никам та шăнкăравламасть

ман телефон —
хутланса выртнă мĕскĕн анчăк —
пĕр сас та кăлармасть

шăплăхсен шăплăхĕ
янравсăрлăх янравĕ

никам та шăнкăравламасть

кĕтмен-туман çĕртен
кранран тумла тумлать те
тĕнче кисреннĕн
эп шарт сиксе илетĕп

никам та шăнкăравламасть

эп пĕр пĕччен
кранран сăрхăнса тухнă тĕссĕр тумлам пек

никамсăрлăх — вилĕм
никамсăрлăх — вилĕм
никамсăрлăх — вилĕм
вилĕм
вилĕм!!!

кранран тумла тумлать
кранран тумлать тумла

*13.07.92*

* * *

Тĕлленет темтепĕр...
Тĕлĕкре кăна,
Çын, курмастăн мар-и
Э с  ч ă н-ч ă н  х ă в н а?

Тĕлĕкре çеç эсĕ
Ирĕклĕ, этем.
Тĕлĕкре çеç эсĕ —
Э с ĕ  х ă в,  э т е м.

Тĕлленет темтепĕр...
Тамăк та Çăтмах...
Пурнăç. Турă. Тĕлĕк...
Ухмахла Юмах!

*27.10.93*

* * *

Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.
Сӳнсессĕн пĕр, тек тивеймест чĕре.
Текех пулмасть, утса Таса Уйпа,
Хăв пуррине хăв чунупа туйма.

Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.
Кĕретпĕр пурте пурпĕрех çĕре.
Çак чăнлăхран тармашкăн майĕ çук,
Ана улăштармашкăн халĕ çук.

Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.
Пире, тен, манмĕç çакă тĕнчере...
Пит хĕретме ан тивтĕр мăнуксен,
Пире, к а й н и с е н е, аса илсен.
Пĕрре пурнатпăр çĕр çинче, пĕрре.

*1981*

* * *

*Л. Куракова*

Пур çĕрте те — Пурнăç.
Пур çĕрте те — Чун.
Ирттĕр ĕмĕр, ирттĕр —
Юлĕ Çутă Кун.

Эс пĕлместĕн: м ĕ н ш ĕ н
Килнĕ эс к у н т а.
Тамăк та, çăтмах та
Санăн çумăнта.

Такама итленĕн
Эс утан мала.
Таврăнма тăрсассăн,
Çул çук каялла.

Хăв пек тăлăх Çутă
Йыхăрать сана.
Тамăк та, çăтмах та
Хуплаймасть ăна.

Эс пĕлен: çав Çутă
Саншăн çеç çунать.
Утнăçем вăл саншăн
Çывăх туйăнать...

Ирттĕр ĕмĕр, ирттĕр!
Юлĕ Çутă Кун.
Кун Çути çунсассăн,
Чĕрĕ пулĕ Чун!

*02.09.91*

* * *

Пурăннăçем
Пурнăçа
ытларах
юрататăп.

Пурăннăçем
çынсене
ытларах
ăнланатăп.

Пурăннăçем
çынсене
ытларах
каçаратăп.

Пурăннăçем
ытларах
ПУРĂНМА
тăрăшатăп.

*18.10.91*

* * *

Шурӑ фарфӑр чашӑк.
Хуп-хура сӗтел.
Пысӑк сарӑ алӑк.
Тунсӑхлӑ тӗпел.

Эп — ҫав фарфӑр чашӑк.
Хуп-хура сӗтел —
Ман яланлӑх палӑк,
Ман хура элчел.

Алӑка уҫмашкӑн
Хытланать такам.
Тен, мана ҫӑласшӑн?
Кам-ши, кам-ши, кам?

Кӑлӑх тӑрӑшать вӑл
Алӑк леш енче.
Ӑна уҫӗ тӑвӑл
Ҫурҫӗр тӗлӗнче.

Шурӑ фарфӑр чашӑк
Сивӗ урайне
Ӳкӗ те сасартӑк
Тупӗ канлӗхне.

*02.08.91*

## ÇУЛ

*Петĕр Эйзина*

Çак çулпах утатăп, çак çулпах.
Турă пўрнĕ çулăм — çакă çеç.
Кирлĕ мар мана умри çăтмах.
Пурпĕрех утатăп, пурпĕрех.

Çак çулпах утатăп, çак çулпах.
Турă пўрнĕ çулăм — çакă çеç.
Пултăрах шуçлак вăл, пултăрах.
Пурпĕрех утатăп, пурпĕрех.

Çак çулпах утатăп, çак çулпах.
Турă пўрнĕ çулăм — çакă çеç.
Нумай мар тата. Тата кăштах...
ÇИТИЧЧЕН Хĕвел ан сўнтĕрех.

*1990*

# ТЁЛПУЛУ

Мучи пикепе калаçать.
Пике ăшшăн-ăшшăн сăпайлăн кулать.
Мучи...
Мучи халь яш каччă!
Мучи çирĕмре!
Мучи — ăмăрткайăк!
Мучи — арăслан!
Мучи туйми пулнă чĕри суранне.
Мучи манса кайнă килти карчăкне.
Мучи чунĕ халь — çеçке çурнă чечек...

Мучи пикепе калаçать.
Пике ăшшăн-ăшшăн кулать.

ÇУК ВАТЛĂХ!
ÇУК ÇАМРĂКЛĂХ!
ЧУН ТА ИЛЕМ —
АК
ЁМĔРНЕ ТЕ СӐНМЕН
ИК ХĔЛХЕМ!

*12.08.91*

## ТУПМАЛЛИ


В. Туркай В. Туркай пирки — кӗскен ........................ 1

Утӑм хыҫҫӑн утӑм — Ирӗклӗх енне!

Чӑваш тупи ........................ 6
Чӑвашсем: коммунизм хыҫҫӑн: ертӳҫӗсӗр ........................ 7
Ҫирӗммӗш ӗмӗр вӗҫӗнчи хурлӑхлӑ чӑвашӑн хӳхлевӗ ........................ 8
Ҫеҫпӗл Мишши ........................ 11
Василий Дворникова ........................ 12
Уй варринче ........................ 13
«Пирӗн урам анаталла...» ........................ 14
Ҫул вӗҫӗ ........................ 15
Кунҫул: кукаҫи тата эпӗ ........................ 16
Ялан вӗсемпе пӗр ҫулпа утманшӑн ӳпкелесен
хӑшпӗр вӗри юлташӑмсене ........................ 17
Тӑван ялӑма ........................ 18
Виталий Адюкова (Этюк Виттине) ........................ 19
Шупашкар: неон ҫутисем ........................ 20
«Аҫтӑрхана ҫитрӗм...» ........................ 21
Сана, вырӑс халӑхӗ! ........................ 22
Тӑван ҫӗршыв (поэма) ........................ 25
Раҫҫей ........................ 26
Шупашкар ........................ 27
«Вырӑсланнӑ чӑвашсем...» ........................ 28
Чулхулапа Хусанӑн хушшисем ........................ 29
1236: Пӑлхар ........................ 30
Атӑлҫи Пӑлхар ишӗлчӗкӗсем куҫ умне тухса
чуна ҫӳсентерсен ҫырнӑ сӑвӑ ........................ 31
«Ентӗ ваpан, хӑта...» ........................ 32
Н. Никифоров журналиста асӑнса ........................ 33
«Гипноз сеансӗ вӗҫленет...» ........................ 34
Чӑвашра Арсем пӗтмен-ха! ........................ 35
«Чӑваш килне иртен-ҫӳрен кӗрсессӗн...» ........................ 36
«Тусӑмсем, эп сире юрататӑп!..» ........................ 37
«Никам та ҫӳремен кичем чиркӳ...» ........................ 39
Александр Волкова асӑнса ........................ 41
«Вӑл ӗненнӗ...» ........................ 42
«Ҫӗр ҫул пурӑнасчӗ...» ........................ 43
Владимир Тяпкина ........................ 44
Рене Каландиана ........................ 45
«Чӑвашла калаҫрӑн-та...» ........................ 46
Митта Ваҫлейне пуҫ тайма ун тӑван ялне
ҫитсе килнисене аса илни ........................ 47
Ҫил ........................ 48
«Пуҫлӑхсем суяҫҫӗ...» ........................ 49
«Суя кермен...» ........................ 50
Акӑшсен юрри (пӗчӗк реквием) ........................ 51
Ҫурт ишӗлет ........................ 53
Пукан ........................ 54
Ҫулҫӳрев ........................ 55
«Мӗн хак эс, ҫын...» ........................ 56
Утӑм хыҫҫӑн утӑм (паянхи марш) ........................ 58
Пехил ........................ 60
Алла-ал тытӑнар-и, туссемӗр! ........................ 61
«Туйра туйри пек пулӑр,...» ........................ 62
Ниме ........................ 63
Ҫичӗ кӗлӗ ........................ 64
Шӑплӑх кӑвайчӗ ........................ 68
«Кайма хатӗрленмешкӗн эпӗ килнӗ...» ........................ 68
«Эпир ҫӗнтеретпӗр!»
Ҫак икӗ сӑмах...» ........................ 69
Шӑллӑмӑрсене ........................ 70

## Эс мана кăштах та шеллеместĕн

«Арапуç хĕрне...» .... 72
«Хăяймастăп санпа тĕл пулма...» .... 73
«Мана савсан...» .... 73
«Савниçĕм, ытала мана...» .... 74
«Эп утрав...» .... 76
«Ăнланмарăн...» .... 76
«Чылай пулать эп йĕменни...» .... 77
«Шăнкăравламарăн...» .... 78
Шикленех. Шиклен .... 79
«Çак тĕлпулу...» .... 79
Юрату ăçта? .... 80
«Тĕттĕмлĕх анчĕ...» .... 81
Каçарсам .... 81
Тумла .... 82
Илемпи .... 83
Неспике .... 84
Çăлăнăç .... 85
«Эп сана Тасалăх парнелесшĕн...» .... 85
«Сумăр çунă чух...» .... 86
«Тунсăх, сивĕ тунсăх...» .... 87
Асăрхаттару .... 88
Шанчăкăма .... 89
Çăлтăр .... 90
Кĕтетĕп. Кĕтетĕп. Кĕтетĕп .... 91
Асаилӳ .... 92
Вăл! .... 93
«Çӳхе туталлăскерĕм...» .... 94
«Çав каçхине...» .... 95
«Пĕрремĕш хут...» .... 96
«Пĕтĕмпех — сана пула...» .... 97
«Малтан — вĕриччĕ...» .... 98
Тепре!.. Тата тепре!.. .... 99
«Тăхта!.. Хамах эп салтăнатăп...» .... 100
«Ылтăн çĕрĕллĕ алă...» .... 101
«Ан шан...» .... 102
«Хывсам, хывсам тумна...» .... 103
«Эс — Ромео, эп — Джульетта...» .... 104
«Эсĕ тата эпĕ...» .... 105
«Калаймарăм, калаймарăм...» .... 106
«Эс мана кăштах та шеллеместĕн...» .... 107
«Юратасшăнччĕ...» .... 107
«Хĕвел...» .... 108

## Шывран кăларнă карапсем...

«Чун...» .... 110
«Ик енче — ик чăнлăх...» .... 111
Каç-кĕвĕ .... 112
«Çур...» .... 113
«Сивĕ тăвăр тĕксĕм пӳлĕм...» .... 114
«Раштав...» .... 115
Сурт .... 116
1992 çулхи çулла «Чувашия» санаторире «Шупашкар-92» фестивале ирттернине аса илни .... 118
Пурăнатпăр-ха! (экспромт) .... 119
Хурлăхлă сăвă .... 120
Хунар .... 121
«Çуратса янă та...» .... 122
«Пĕччен хĕрарăм...» .... 122
«Ансат ман сăввăм...» .... 123
Валери Туркай Валери Туркая халаллană сăвă .... 124
Пĕрне — çав тери тимлĕ те асăрханулăскере .... 125
Чап .... 126

«Сывă пултăр...» .......... 127
Ман килйыш .......... 128
Хула-каç-эпĕ .......... 129
Çĕлен ăшши .......... 130
«Паян-чăтма çук йывăр кун...» .......... 131
Пасар .......... 132
«Эп хресчен...» .......... 133
Тăвăл .......... 135
«Тапăртатса тăран тур лашине...» .......... 137
Михаил Булгакова — пуçăма тайса .......... 138
«Тек нихçан та çыраймассăн...» .......... 139
«Пĕчченлĕх, пĕчченлĕх,..» .......... 140
«Ĕмĕр пурăн — ĕмĕр тĕлĕн!..» .......... 141
«Эп чи малти мар...» .......... 142
Пурнăç. Çулталăкри пĕр кун .......... 143
А .......... 144
Арсений Тарасова .......... 145
1993 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă
палламан чăваш ачине .......... 146
«Шупашкар — Елчĕк» автобусра паллашнă
Юля А. штукатур-маляра .......... 147
Хĕвелçаврăнăш: шăпа .......... 148
Дели .......... 149
«Мадрасра чăтма çук пăчă...» .......... 150
Э п экватор патне кăшт анчах çитеймерĕм .......... 151
«Джайпурта эп ярăнтăм...» .......... 152
Югослави. Ностальги .......... 153
Тадж — Махал .......... 154
Метро .......... 155
«Мĕнех, тăванăм,..» .......... 156
Мул .......... 157
Пурнăç .......... 158
«Темĕскер çитмест...» .......... 158
Йăпанăвăм .......... 159
Хальхи çĕрме пуянсенчен пĕрне — чăтма çук юратса .......... 160
«Кăлăхах ăмсанатăн мана...» .......... 161
Килсĕр йытă .......... 162
«Хăш чух никама та курассăм килмест...» .......... 163
Ĕмĕлкесем .......... 164
Çурта .......... 165
Чăрăш .......... 166
Вăхăт + лăх .......... 167
«Çунтарса ярасчĕ...» .......... 168
«Эпир чĕмсĕр...» .......... 169
Читлĕх .......... 170
Элеги .......... 171
«Илеп те ак шăпăр,..» .......... 172
«Пин тĕрлĕ шухăш...» .......... 173
Ункă .......... 174
Çĕнĕ çул .......... 175
«Янкăр кăвак тӳпере...» .......... 176
«Ăçта эс, манăн тунсăхлă кĕслем...» .......... 177
«Хурлăхлă, хурлăхлă,..» .......... 178
«Эпир кунта...» .......... 179
«Калама юраман сăмахсем...» .......... 180
«Никам та шăнкăравламасть...» .......... 181
«Тĕлленет темтепĕр...» .......... 182
«Пĕрре пурăнатпăр...» .......... 183
«Пур çĕрте те — Пурнăç...» .......... 184
«Пурăннăçем...» .......... 185
«Шурă фарфăр чашăк...» .......... 186
Çул .......... 187
Тĕлпулу .......... 189

Валери ТУРКАЙ

**ШУРӐ ФАРФӐР ЧАШӐК**
**БЕЛАЯ ФАРФОРОВАЯ ЧАШКА**

Сӑвӑсем. Поэма
Чӑвашла
На чувашском языке

Кӗнекене Ст. МИХАЙЛОВ-ЮХТАР илемлетнӗ
Техника редакцийӗ: Э. ИСАЕВА

Оформление художника С. МИХАЙЛОВА-Юхтара
Техническое редактирование Э. ИСАЕВОЙ.

Сдано в набор 11.01.94. Подписано к печати 22.03.94
Формат 84x108 1/32. Бумага офсетная № 1.
Гарнитура «Таймс». Печать офсетная.
Усл. печ. л. 10,08. Уч изд. л. 6,51. Тираж 5000 экз.
Заказ № К 202. Цена свободная.

Типография Изд-ва «Чувашия», 428019 г. Чебоксары,
пр. Ивана Яковлева, 13